Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

63 (8024) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи çурла (август) уйăхĕн 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## «Надежда» шанчăк кӳрет

***Муркашри районти ачапăча тĕп библиотеки хăйĕн тĕп функцийĕсене пурнăçланипе кăна çырлахса лармасть. Çамрăксене вулав ĕçне явăçтарас, çемье вулавне аталантарас, вулав культурине ӳстерес, çул çитменнисене хăйсене тытмалли нормăсене, сывă пурнăç йĕркине пропагандăлас, патриотла воспитани парас, экологипе краеведени ĕç-хĕлне явăçтарас тĕлĕшпе те пысăк ĕç туса ирттерет. Библиотека заведующийĕ Елена Налимова каласа pană тăрăх (сăн ӳкерчĕкре варринчи) 5 çул каяллах кунта çул çитменнисен «Доверие» клубне йĕркеленĕ. Çак кунсенче вара «Надежда» консультаципе методика центрĕ ĕçлеме тытăнчĕ. Унăн ĕçĕ нумай енлĕ. Пĕрремĕш кунран тытăнсах унта çӳреме кăмăл тăвакансем çук мар ĕнтĕ.***



**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Район уй-хирĕсенче

## Çумăрсем чăрмав кӳчĕç пулин те

* Иртнĕ кунсенче çанталăк çумăрлă тăчĕ, вырма ĕçĕсене ирттерме самай чăрмантарчĕ. Апла пулин те васкаварлисем уяр çанталăкăн кашни саманчĕпе май пур таран туллинрех усă курма тăрăшаççĕ. Çапла вара районĕпе ĕнерхи кун тĕлне тĕш тырă культурисене 4172 гектар çинчен (31 процент) пухса кĕртме ĕлкĕрнĕ. Ĕç çинче малтисен шутĕнче «Восток» (58 процент), Ильич яч. хис. (49 процент), Чкалов яч. хис. (47 процент) пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем, «ВаСем» (69 процент) тата «Колос» (44 процент) чикĕллĕ яваплăхлă обществăсем, А.И. Толстовăн (43 процент), А.А. Афанасьевăн (45 процент), А.Н. Пихтеровăн (67 процент) хресчен (фермер) хуçалăхĕсем. Çав вăхăтрах Чапаев яч. хис. хуçалăхра, Мичурин яч. хис. агрофирмăра, «Возрождение» обществăра хирте тырă пурри пирки «манса кайнă» пулас, вырма ĕçĕсене пуçăнма халĕ те васкамаççĕ.

* Çурхи тулă 393 гектар (10 процент), урпа 1716 гектар (26 процент) вырса çапнă. Урпа пуссисенче çак ĕçе «ДаАн» тата «ВаСем» обществăсенче вĕçленĕ.

* Пӳлмесене тырă пĕтĕмпе 6704 тонна хывса хăварнă. Вăл шутран тулă 2645 тонна тата урпа 3301 тонна. Районĕпе тĕш тырă культурисен вăтам тухăçĕ гектар пуçне 16,1 центнерпа танлашать. Вăл шутран тулă тухăçĕ 14 центнер тата урпа тухăçĕ 19,2 центнер. Тухăç пĕтĕмĕшле чи пысăкки «ВаСем» обществăра – гектар пуçне 22,8 центнер.

* Улăма 3577 гектар çинчен пухса тирпейленĕ. Ку вăл çапса тĕшĕленин 86 процентĕ пулать.

* Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 200 гектар, «Восток» хуçалăхра 35 гектар, Ильич яч. хис. хуçалăхра 40 гектар, «Путь Ильича» агрофирмăра 50 гектар, «Ударник» хуçалăхра 30 гектар, «Чкалов яч. хис. хуçалăхра 30 гектар, «ВаСем» обществăра 369 гектар çĕртме сухи тунă.

* Çанталăк условийĕсене кура ĕнерхи куна «Герой» тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсем кăна хăйсен «хир карапĕсене» тĕш тырă пуссисене кăларнă.

* Çак вăхăта обществăлла выльăх-чĕрлĕх валли 5143 тонна (93 процент) утă, 15501 тонна (92 процент) сенаж, 4465 тонна (23 процент) силос хатĕрлесе хăварнă, 80 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ авăртнă. Ку вăл иртнĕ çултан юлнă саппассене шута илмесĕр.

Вырма – 2012

## Тĕслĕх кăтартаççĕ

Вырмана хутшăнакан механизаторсен районти конкурсĕн итогĕсене пĕтĕмлетес енĕпе йĕркеленĕ комиссин ларăвĕ иртнĕ. Вырмана хутшăнакан комбайнерсен августăн 9-мĕшĕнчен тытăнса 15-мĕшĕччenхи ĕçĕн итогĕсене пĕтĕмлетнĕ.

Ял хуçалăх предприятийĕсенчи вырмана хутшăнакан механизаторсен районти ăмăртăвĕнче августăн 9-мĕшĕнчен тытăнса августăн 15-мĕшĕччenхи тапхăр итогĕсемпе çаксем мала тухнă тесе йышăннă.

1-мĕш вырăнта – Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕн **Болеслав Николаевич НИКИТИН** экипажĕ. «Вектор-410» маркăллă комбайнпа 162,3 условнăй тонна тырă вырса çапнă.

2-мĕш вырăнта – «Восток» ял хуçалăх производство кооперативĕн **Сергей Валериянович НАУМОВ** экипажĕ. «Енисей-1200» маркăллă комбайнпа 143,8 условнăй тонна тырă вырса çапнă.

3-мĕш вырăнта – «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăн **Владимир Владимирович РЫБАКОВ** экипажĕ. «Полесье-1218» маркăллă комбайнпа 140,6 условнăй тонна тырă вырса çапнă.

1-мĕш вырăна тухнă комбайн экипажĕ 1000 тенкĕлĕх, 2-мĕш вырăна тухни 800 тенкĕлĕх, 3-мĕш вырăна тухни 500 тенкĕлĕх свидетельствăсене тивĕçнĕ.

Ăстасем валли

## Кулибинсем, сире кĕтеççĕ!

Район администрацийĕн экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх кăçал та «Компания корпоративного управления «Концерн тракторные заводы» чикĕллĕ яваплăхлă общество Чăваш Республикин Ял хуçалăх министерствипе тата Промышленноçпа энергетика министерствипе пĕрле хăйсем тĕллĕн хатĕрленĕ трактор техникин «Кулибин XXI века» конкурс выставкине ирттерет. Вăл икĕ номинацире иртмелле: трактор техники тата ял хуçалăх машинисемпе хатĕрĕсем.

Конкурса уйрăм çынсем те, халăх отраслĕн пур организацийĕсем те, наукăпа тĕпчев тата проектпа конструктор организацийĕсем те, аслă тата вăтам пĕлӳ паракан учреждениесем те, изобретательсемпе рационализаторсем те хутшăнма пултараççĕ.

Призлă вырăн йышăннисене парнесем кĕтеççĕ. 1-мĕш вырăншăн 15000 тенкĕ, 2-мĕш вырăншăн 10000 тенкĕ, 3-мĕш вырăншăн 5000 тенкĕ. Кунсăр пуçне ятарлă Гран-при премине палăртнă – 30000 тенкĕ.

Конкурс Шупашкарта «Научно-технический музей истории трактора» НУК базинче сентябрĕн 21–28-мĕшĕсенче иртет. Конкурса хутшăнас кăмăллисен 2012 çулхи сентябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр райадминистрацин экономика тата АПК аталантарассин пайне (305-мĕш кабинет, тел: 62-4-45) заявка тăратмалла.

Сăмах май, асăннă конкурса пирĕн районти изобретательсем тăтăшах хутшăнаççĕ, хăйсене лайăх енчен кăтартаççĕ. Конкурс итогĕсемпе 2010 çулта «Ял хуçалăх машинисем» номинацире Валерий Пигачев палăрнăччĕ. 2011 çулта вара çĕнтерӳçĕсем пирĕн районтан харăсах иккĕн пулчĕç: «Трактор техники» номинацире Анатолий Николаев, «Ял хуçалăх машинисемпе хатĕрĕсем» номинацире Николай Ермаков пĕрремĕш вырăнсене тивĕçрĕç.

Апла пулсан кăçал та районти ăстасенчен лайăх кăтартусем кĕтетпĕр.

Саккунри çĕнĕлĕхсем

## Çăмăллăхсене сыхласа хăварнă

Чăваш Республикин «Граждансен уйрăм категорийĕсене пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх услугисемшĕн тӳлессипе социаллă пулăшу памалли мерăсем çинчен» Саккунне улшăнусем кĕртнĕ.

Сăмах кунта Чăваш Республики тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен тытăмне кĕрекен культура учрежденийĕсен ĕçченĕсен категорийĕсем пирки пырать.

2011 çулта муниципаллă районсен тата ял тăрăхĕсен шайĕнче юридици статусĕллĕ бюджетлă, автономлă тата хысна (казенный) культура учрежденийĕсем йĕркелерĕç. Штатсенче «ертӳçĕ» категори те пур. Унччен вара вĕсем «специалист» должноçĕнче ĕçленĕ май коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессипе çăмăллăхсемпе усă курнăччĕ. «Ертӳçĕ» категорие лекнĕ май ку çăмăллăхсемпе сыв пуллашма тивнĕччĕ. Саккуна улшăнусем кĕртнĕ май культура учрежденийĕсен ял тата хула тăрăхĕсен территорийĕсенче ĕçлекен тата пурăнакан ертӳçисене малашне ку çăмăллăхсемпе тивĕçтереççĕ.

2011 çулта пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тӳлессипе социаллă çăмăллăхпа республикăри культура учрежденийĕсен 1620 ĕçченĕ усă курнă. Çав тĕллевпе республика бюджетĕнчен 15,3 миллион тенкĕ уйăрнă. 2012 çулхи июлĕн 1-мĕшĕ тĕлне культура сферин 1579 ĕçченĕ валли пĕтĕмпе 8,1 миллион тенкĕ уйăрса панă.

**Н. БЕЛОВА,**
**специалист.**

Кĕскен

## Пуçлăхсем улшăннă

Июлĕн 31-мĕшĕнче хăйĕн тивĕçĕсене пурнăçлама пăрахасси çинчен Ярапайкасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В. Голубев пĕлтернĕччĕ. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене халĕ кунта Э. Алексеева пурнăçлать.

Августăн 16-мĕшĕнче Çатракасси ял тăрăхĕн Пухăвĕн депутачĕсем Ю. Кожевников пуçлăх тивĕçĕсене пурнăçлама пăрахасси çинчен çырнă заявление пăхса тухнă. Ял тăрăхĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлама Г. Трофимова шаннă.

Саламлатпăр



Пирĕн хаклăран та хаклă юратнă мăшăра, хисеплĕ аннене, кăмăллă асаннене, хаклă тăвана – Муркашра пурăнакан **Алевтина Петровна ХЛАШЕВĂНА** ăшшăн ыталаса, хĕрӳллĕн çупăрласа сумлă юбилей ячĕпе пур кăмăлтан саламлатпăр. Вăрăм та çутă ăраскаллă ĕмĕр пурăнма ирхи сывлăм пек таса сывлăх, иксĕлми çăл куç пек тапса тăракан çĕнĕрен те çĕнĕ вăй-хал, çурхи хĕвел пек ăш пиллĕн шăранса тăракан савăк кăмăл сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Пысăк салампа: мăшăрĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, ывăлĕ, Филипп, Амалия, Марат мăнукĕсем, Волковсен, Суворовсен çемйисем, тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă, юратнăран та юратнă мăшăрăма, аттене, кукаçине, асаттене, хăтана, тăванăма – Катькас ялĕнче пурăнакан **Леонид Иванович МОКИНА** 65 çулхи юбилей ячĕпе чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, юхан шыв пек вăрăм кун-çул, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал, икĕсĕлми телей сунатпăр. Эс пурри пирĕншĕн пысăк телей, савăнăç. Пурăн эсĕ çĕр çул савăнса, пире юратса. Сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, пур тăвансемпе пĕрле савăнса пурăнмалла пултăр. Эпир санпа мухтанатпăр, эсĕ пурришĕн савăнатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕпе 2 хĕрĕ, кинĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумне – капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн ертӳçине **Владимир Германович НИКИТИНА** 55 çул тултарнă ятпа чунтан хисеплесе саламлатпăр.

Районта çул тумалла е юсамалла, нумай хваттерлĕ çуртсем çĕкленеççĕ-и е тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналллă сферăра халăхăн нумай ыйтăвне татса памалла, районăн тирпей-илемĕ мĕнле пуласси те пирĕн ертӳçĕ, ĕçтешĕмĕр Владимир Германович ĕçе епле йĕркеленипе çыхăннă. Вăл – специалистсен шухăшне шута хуракан, хаклакан, çынна ăнланакан, хăйĕн ĕçне пĕлекен ăста ертӳçĕ. Çакăншăн хисеплетпĕр эпир Сире, Владимир Германович. Сирĕн çитĕнӳсемшĕн савăнатпăр, малашнехи кун-çулăрта ыра кăна сунатпăр. Сывлăхăр яланах çирĕп пулччăр, пурăнас, ĕçлес вăй-хăват тапса кăна тăтăр. Çемйĕрте те яланах юратупа ăнлану пултăр, ачăрсем савăнтарса кăна тăччăр, мăнукăрсем Сирĕншĕн çамрăклăх çăл куçĕ пулса тăччăр. Кун-çулăр вăрăм та телейлĕ пултăр.

**Ырă салампа: район администрацийĕн капиталлă строительство тата обществăлла инфраструктурăна аталантарассин управленийĕн коллективĕ.**

Пĕрлехи информаци кунĕнчен

# Ыйтăвĕсем кашнинех пырса тивеççĕ

***Пĕрлехи информаци кунĕсене irttересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Районта черетлĕ информаци кунĕ августăн 15-мĕшĕнче иртрĕ. Асăннă мероприятие irttерме республикăран Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Эдуард Александров ертсе пыракан тăватă ушкăн килчĕ. Вĕсем район администрацийĕн ответлă ĕçченĕсемпе тата федераллă структурăсен районти уйрăмĕсен представителĕсемпе пĕрле Муркаш, Çатракасси, Шетмĕпуç, Оринин, Турай тата Хорнуй ял тăрăхĕсенче пулчĕç, вĕсенчи ĕç коллективĕсемпе тĕл пулчĕç, ял çыннисен ыйтăвĕсем çине хуравларĕç.***

## Муркашра «Надежда» центр уçăлчĕ

Пĕрлехи информаци кунĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕпе Э.В. Александровпа пĕрле чи малтан Муркашри А. Николаев ячĕпе хисепленекен ача-пăча библиотекинче «Надежда» консультаципе методика центрне уçнă çĕрте пулчĕ.

Палăртмалла, асăннă библиотекăра 5 çул ĕнтĕ çул çитмен çамрăксен «Доверие» клубĕ ĕçлет. Çитĕнекен ăрăва сывă пурнăç йĕркине ăша хывтарасси, вĕсене тӳрĕ çултан пăрăнасран сыхласа хăварасси – акă мĕн тĕп вырăн пулса тăнă çак клуб ĕçĕнче. Ку вăл ку таранччен пулни.

«Средне-Волжский Транснефтьпродукт» акционерсен уçă обществи 100 пин тенкĕ парса пулăшнипе халĕ çакăн пек центр йĕркелеме май килчĕ. Библиотека ертӳçи Е.И. Налимова каланă тăрăх халĕ кунта ачасемпе тата çул çитмен çамрăксемпе ĕçлеме условисем те палăрмаллах лайăхланнă. Район администрацийĕн культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи Е.Г. Чернова каланă пек, консультаципе методика центрĕнчи килти пӳлĕмри пек лару-тăру врачсемпе психологсене, ытти специалистсене ачасен чун-чĕри патне часрах çул тупма пулăшать. Урăхла каласан çул çитмен çамрăк хăйĕн кĕтмен çĕртен сиксе тухнă йывăрлăхĕпе пĕччен тăрса юлмасть. Кунта ăна ăнланаççĕ, пулăшаççĕ – çакна туйса тăни малалла шанăçпа пăхма, йывăрлăха çĕнтерме пулăшать. Çакăнта пулĕ асăннă центрăн тĕп тĕллевĕ.

Пулăшусем вара кунта тĕрлĕ енлĕ пулĕç. Врачсем, психологсемпе психотерапевтсем, юристсем çул çитмен кашни çамрăка уншăн шăпах усăллă сĕнӳсем парĕç. Консультаципе методика центрĕ irttерме хатĕрлекен культурăллă массăллă мероприятисем те ачасемпе çул çитмен çамрăксене нравственноç тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ, пурнăçра питĕ активлă пулма пулăшĕç. Тĕрлĕрен семинарсем те, право ыйтăвĕсемпе иртекен калаçусем те, центрăн ытти мероприятийĕсем те ачасене пурнăçра хăйсене çирĕп туйма хăнăхтарĕç.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев асăннă центрта инвалидсемпе (çав шутран инвалид ачасемпе те) ытларах ĕçлеме сĕнчĕ.

Ку шухăша «Средне-Волжский Транснефтьпродукт» акционерсен уçă обществин генеральнăй директорĕн çумĕ Ч.У. Махмутов та **(сăн ӳкерчĕкре варринче)** ырларĕ. «Эпир панă 100 пин тенкĕ укçа çакăн пек усăллă ĕç тума кайнăшăн савăнатпăр кăна. Енчен те эсир çак центра анлăлатса медицинăпа реабилитаци центрĕ уçма шутлатăр пулсан эпир хаваспах укçа-тенкĕ енчен пулăшнă пулăттăмăр», – терĕ Чингиз Усматович.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев хăнана асăннă центра уçма пулăшнăшăн Тав çырăвĕпе чысларĕ. Спонсор хăй те центра валли парне пачĕ.



## Мĕн палăртнине пурнăçлама пулатех

Пĕрлехи информаци кунĕ вара малалла çавра сĕтел хушшинче иртрĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев район аталанăвĕ çинче пур енлĕн чарăнса тăчĕ. Кăçалхи 7 уйăхра кăтартусем пур сферăра та иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен пысăкрах. Промышленноç предприятийĕсенчен Муркашри кирпĕч завочĕ уйрăмах ăнăçлă ĕçлерĕ. Яланхи пекех «Сеспель» предприяти пысăк утăмсемпе пырать. Муркашри çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ те ăнăçлă ĕçлекен предприятисен шутĕнче.

Ростислав Николавич çул тăвас-юсас, шкулсене çĕнĕ вĕренӳ çулне хатĕрлес, шывпа тивĕçтерес ыйтусем çинче те тĕплĕн чарăнса тăчĕ. 4 шкула кăçал тĕпрен юсанă. Муркаш шкулĕ валли кăна, тĕслĕхрен, район бюджетĕнчен 5 миллион та 400 пин тенкĕ хушма укçа уйăрнă. Çак кунсенче Муркаш лицейне ача сачĕ тума реконструкцилеме пуçлаççĕ. Мăн Сĕнтĕрти культурăпа кану центрĕ çумне те пристрой тума пуçламалла т. ыт. те.

Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн çумĕ Э.В. Александров республикăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе паллаштарчĕ. Патшалăх паракан пулăшусем çинче тĕплĕн чарăнчĕ, вырма ĕçĕсемпе паллаштарчĕ.

Каламалла, тĕл пулăва районти инвалидсем, культура ĕçченĕсем, учительсем, ял çыннисем пуçтараннă. Вĕсем хăйсене хумхантаракан ыйтусене хускатрĕç. Калайкассинче çывăхра аптека çук. Васкассисем Муркашран хăйсен ялне çитекен çула юсасса кĕтеççĕ, куç курман инвалидсемпе ĕçлекен организацин пӳлĕмĕ те пĕчĕкрех. Ростислав Николаевич пур ыйту çине те тулли хурав пачĕ. Хăшĕсене тӳрех татса пама май пуррине, теприсене хăçан мĕнле татса парасси пирки ăнлантарчĕ.

Унтан район администрацийĕн пуçлăхĕ Е.А. Андреев яч. хис. хуçалăх ĕçченĕсемпе тĕл пулчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ асăннă хуçалăхра вырма ĕçĕсене япăх мар йĕркеленине палăртрĕ, хуçалăхра ĕçлекенсене чуна парса вăй хунăшăн тав турĕ. Йĕтем çинче ĕçлекенсем Ростислав Николаевичпа чуна уçса калаçрĕç. Çурлатрине çитмелли çула хăçан тăвасси çинчен ыйтрĕç. Çулталăк вĕçлениччен кунта вак чул сарнă çул пуласса шантарчĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ. Муркашри Октябре 50 çул урамри 44-мĕш çуртра пурăнакансем хваттерсене хăйсем хутса ăшăтмалла тăвас ыйту та калаçуран мала кайманнишĕн пăшăрханаççĕ. Çак тата ытти ыйтусем тавра та калаçрĕç тĕл пулура. Хуçалăхра ĕçлекенсем Ростислав Николаевича района ертсе пырас çăмăл мар ĕçре ăнăçусем сунчĕç.

Çакна та каласа хăвармалла. Пĕрлехи информаци кунне хутшăнакансем ял халăхĕпе тĕл пуличчен район администрацийĕн пуçлăхĕпе Р.Н. Тимофеевпа тĕл пулчĕç. Вĕсене район ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарнă май Ростислав Николаевич çӳп-çапа вырăнтан илсе тухас ыйту çинче те чарăнчĕ. Хваттерте пурăнакансем уйăхсерен уншăн тӳлеççĕ. Ялсенче пурăнакансем тĕлĕшпе те çакăн пек йĕрке тумаллине, çакăн çинчен республика, Раççей шайĕнче ятарлă документ йышăнни вырăнлă пуласса палăртрĕ.

Пĕрлехи информаци кунĕ хыççăн вара унта хутшăннисем тĕл пулусенче хускатнă ыйтусене татса памалли çул-йĕре палăртрĕç.

**Л. ПАВЛОВА.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Мĕнпе «сывлать-ха» паян коммуналлă хуçалăх?

Конкурентлă политикăпа тарифсен Чăваш Республикинчи патшалăх службин ертӳçин çумĕ Роза Лебедева тата район администрацийĕн финанс пайĕн пуçлăхĕ Рената Ананьева «Моргаушское» пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхĕ» муниципаллă предприяти тата «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн ертсе пыракан компанийĕ» чикĕллĕ яваплăхлă общество ĕçĕ-хĕлĕпе паллашрĕç.

Паллă ĕнтĕ, ку отрасль ыттисемпе танлаштарсан чи кăткăссисенчен, ыйтусем сахал мар çуратаканнисенчен пĕри. Ертсе пыракан компани директорĕ Николай Любимов палăртнă тăрăх çавна пула тăтăшах судсем тăрăх çӳресех чылай вăхăт çухатма тивет. Чылай чухне парăмçăсемпе, уйрăм çынсемпе, предприятисемпе тата организацисемпе çыхăннă ыйтусене суд йышăнăвĕпе кăна татса пама пулать.

Чылай чухне пирĕнтен ытларахăшĕ коммуналлă предприятисене, ертсе пыракан компанисене ятламаайăплама хăнăхнă. Тĕрĕссипе вара вĕсене те ăнланма пулать. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн директорĕ Сергей Тимофеев асăннă тĕслĕхех илсе пăхар. Услугăсемшĕн ял çыннисенчен, хваттерсенче пурăнакансенчен укçа пухасси-илесси чылай çĕрте «уксахлать». Парăмçăсем сахал мар. Çавна май предприяти хăй парăмра. Сергей Николаевич ним тума та май çуккипе парăмсене парса татма хăй кредит илме лекесси пирки те пытармарĕ.

Халĕ районта пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕ пĕрре кăна. Мăн Сĕнтĕртине Муркашрипе пĕрлештернĕ. Çавна май Мăн Сĕнтĕрсен парăмĕ те 1 миллион та 108 пин тенкĕ Муркашри предприяти çине куçнă.

Предприяти пăхса тăракан нумай хваттерлĕ çуртсенче газификаци ĕçĕсене 1980-мĕш çулсенче туса irttернĕ. Муркашри пĕрремĕш номерлĕ котельнăях илер. Тĕп котельнăйра 1987 çулта вырнаçтарнă оборудованипе, шыв ăшăтмалли хурансемпе усă кураççĕ. Вĕсене тахçанах улăштарма, котельнăя реконструкцилеме вăхăт çитнĕ. Укçи-тенки вара çавна валли сахалтан та 8 – 9 миллион тенкĕ кирлĕ. Ăçтан тупмалла, кам парать ăна? Çак котельнăйран ăшă илсе тăракансенчен пуçтармалла-и?

Апла та, капла та май çук. Кăçалхи çула илес пулсан çынсенчен ăшăпа, шывпа усă курнăшăн, çӳп-çап тиесе турттарнăшăн укçа пухасси япăх мар пырать пулин те, парăмлисем çук марха. Акă Нискассинчи пилĕк хутлă çуртра пурăнакансен парăмĕ иртнĕ çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 330 пин тенкĕне çитнĕ, Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи икшер хутлă икĕ çуртра пурăнакансен çав тапхăршăнах ăшăпа усă курнăшăн тата йăла каяшне турттарнăшăн предприятие 130 пин тенкĕ тӳлемелле.

Счетчиксем вырнаçтарни те тепĕр чухне уссине памасть. Ытларахăшĕ унчен мĕнле пурăннă, малашне те çавăн пекех пурăнмалла тесе шухăшлать пулмалла. Çакна чи малтанах шывпа усă курнăшăн тӳлесси пирки каламалла. «Пăрăхне хам хунă, шывне хам кĕртнĕ, мана никам та пулăшман, шывшăн манăн мĕншĕн-ха укçа тӳлемелле?» – тесе шухăшлакансем çук мар. Акă шыв счетчикĕсене Муркашри кирпĕч заводĕнче вырнаçтарнă ĕнтĕ. Анчах та шывшăн кунти хваттерсенче пурăнакансенчен чылайăшĕ тӳлеме килĕшмест. Мĕнле мел тупмалла кунта, вăйпа укçине те илейместĕн, шыв парассине пачах чарса лартма та май çук.

Нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсене харпăр хăй хутса ăшăтасси çине куçассинех илер. Вырăссем калашле, ку ыйту та «палка с двумя концами». Пĕр енчен лайăх темелле, укçа-тенкĕ пуçтарассипе хăшкăласси чакать. Тепĕр енчен вара... Кăçал 5 çуртра хваттерсене хăрпăр хăй хутса ăшăтма пуçăнаççĕ. Çавна май коммуналлă хуçалăх предприятийĕ 1 миллион тенкĕне яхăн «çухатать». Çитменнине котельнăйне ĕçлеттересех пулать, котельнăйран ăшă илсе тăракансем вĕсем анчах мар. Тăкакĕсем вара çав шайрах юлаççĕ темелле.

Мăн Сĕнтĕр больницин территорийĕнче вырнаçнă котельнăй больницăпа 8 хваттере кăна ăшăпа тивĕçтерет. Ытти потребительсем харпăр хăйне хăйсемех ăшăпа тивĕçтереççĕ. Ăçтанха ку котельнăя тытса тăнин тăкакĕсем саплашăнччăр? Котельнăй пĕтĕмпе те 50 процента яхăн хăватпа ĕçлет. Тарифсене хăпартса тăкаксене потребительсен кĕсйи шучĕпе саплаштарни те ыйтăва татса пани мар. Ахаль те ял çыннин услугăсемшĕн тӳлеслĕх майĕсем хĕсĕкрех.

Хальхи вăхăтра пысăк укçаллă инвесторсем коммуналлă хуçалăха килессе шанни те кăлăхах. Тăкаклă отрасль кама-ха интереслентерĕ?

Коммуналлă хуçалăх предприятине хальхи вăхăтра уборщиксем çитмеççĕ. Анчах та вĕсене тытас пулсан ĕç укçи тӳлес пулать. Нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансенчен ытларахăшĕ вара тӳлеме килĕшмест.

Юлашки вăхăтра пултаруллă, ăста, ĕçе хăнăхса çитнĕ кадрсем пăрахса кайни предприяти ертӳçине Сергей Николаевича хытах шухăшлаттарать. Апла пулин те нимĕн те тума май çук, çакна ăнланмалла та. Тепĕр ĕç паракан уйăхне 40–50 пин тенкĕ тӳлеме килĕшет пулсан кам-ха 10–15 пин тенкĕшĕн ĕçлĕ? Ĕçĕ-хĕлĕ вара çăмăллисен шутĕнче мар.

Район территорийĕнче йăла каяшĕн полигонĕ хута кайнă ĕнтĕ. Анчах та çӳп-çап ыйтăвне йĕркеллĕ татса парасси ниепле те вырăнтан тапранасшăн мар. Ăна нумай хваттерлĕ çуртсем патĕнчен турттарса тăрассипе ыйту çук темелле ĕнтĕ. Анчах та ялсенчен çӳп-çап турттарасси йĕркене кĕреймест. Е унта, е кунта çĕнĕрен çĕнĕ санкцилемен свалкăсем «уçăлаççĕ», çуп-çап тултарнă михĕсен куписем «ӳсме» тытăнаççĕ. Ял çынни çуп-çап тиесе ăсатнăшăн укçа тӳлесшĕн мар.

Апла пулин те пĕтĕмпех хура сăрăпа сăрламалла мар пулĕ. Лайăххипе пĕрлех япăххине те, япăххипе пĕрлех вара лайăххине те курма пĕлмелле. Район территорийĕнче йăла каяшĕн полигонне хута яма пултарни хăй кăна мĕне тăрать. Республикăри чылай районсенче кун пеккине ĕмĕтленме кăна пултараççĕ. Аса илер-ха, Мăн Сĕнтĕрти санкцилемен свалка унччен мĕн чухлĕ ыйту çуратнăччĕ. Ялсенчен каяш турттарса тăрассипе вара республика е патшалăх шайĕнчех тивĕçлĕ йышăну кирлĕ пулĕ.

Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх сферинче те ырă еннелле улшăнусем çук мар. Палăртрăмăр ĕнтĕ, услугăсемпе тивĕçтернĕшĕн укçа пухасси кăçал унчченхинчен самай лайăхрах пырать. Апла пулсан парăмçăсен шучĕ те чакасса шанма пулать. Кунсăр пуçне тата Роза Петровнăпа Рената Иосифовна сĕнĕвĕсене те шута илмесĕр май çук. Капиталлă юсав, строительство, реконструкци ĕçĕсене туса irttерме укçа çук тесе ларнипе нимĕн те пулмасть. Ятарлă программăсем туса хатĕрлес пулать, шутламалла, анализсем, расчетсем тумалла: апла тусан тĕрĕсрех-и, капла тума май пур-и? Конкретлă та тĕрĕс ыйту тимлĕхсĕр юлмастех.

Информаци ушкăнĕ çавăн пекех нумаях пулмасть Муркашра уçăлнă бизнес-инкубатор ĕçĕ-хĕлĕпе те паллашрĕ.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

Пирĕн пата çыраççĕ

# Хамăр çине айккинчен пăхар-ха

Тĕрлĕрен уявсемпе праçникене юлашки вăхăтра хуларисем пек кăна мар, вĕсенчен те чаплăрах тума пуçларăмăр. Вĕсем халăхшăн интереслĕ, чылай вăхăт асра юлмалла пулччăр тесе культура ĕçченĕсем, ытти яваплă çынсем уявсене хатĕрлеске сахал мар вăй хураççĕ. Пултарулăх ушкăнĕсем (вăл шутра чĕннисем те), эстрада юрăçисем хăйсен юрри-ташшипе пурин кăмăлне те хăпартма пултараççĕ. Суту-илӳ ĕçченĕсем те хăйсен таварĕсене йăл кулăпа сĕнеççĕ. Тĕрлĕрен спорт вăййисенче те вăй виçеççĕ уявсенче спортпа туслисем. Йăлтах аван темелле пек.

Анчах та уявсен «тӳнтер» енĕсем те çук тесе калама хал çитмест. Паянхи уявсенче еплерех тытать-ха хăйне ÇЫН?! Эпĕ çапла ятарласах ÇЫН сăмаха палăртрăм-ха. Мĕншĕнне ман шухăш-кăмăла уяса илсен хаçат вулакан ăнланĕ тетĕп.

Килти хушма хуçалăхра выльăх тытакан кирек кам та çакна пĕлет: выльăхсем хăйсем выртан-тăран вырăна вараламаççĕ. Хăйсен «ĕçĕсене» аякка пăрăнса «пурнăçлаççĕ». Çисе-ĕçессине те хăйсем пултарнă таран тирпейлĕ пурнăçлаççĕ.

Эпир вара, ÇЫНСЕМ, пур чухне те апла мар! (Паллах, пурте теместĕп). «Тĕнче хуçисем» пулнă май тем тума та юрать тесе шухăшлатпăр-ши?

Уявсем вăхăтĕнчех ăçта килчĕ унта ĕçетпĕр-çиетпĕр (ятарлă вырăнсем пур пулсан та), хыттăн шавлатпăр. Кайран мĕн юлнине (апат-çимĕç юлашкийĕсем те, пуш савăт-кĕленчисем те) çавăнтах «манса» хăваратпăр.

Ун пек хăтланнипе мухтанма хăтланакансем те тупăнаççĕ тата! Хăйсем «чăнкă», «маттур» ÇЫНСЕМ (?) пулнине эрех-сăра ĕçсе ăс-тăнне сухатнă яшсемпе хĕрсем те кăтартма именмеççĕ. «Çичĕ хутлă» сăмахсемпе хĕрĕсем те (хĕрсемех-ши тата?) хальхи вăхăтра питĕ ăста усă курма пуçларĕç. Кам вĕсене чылайрах пĕлет тесе пĕр ушкăна пухăнса тăрса хăйсем хушшинче «ăмăрту» та йĕркелеççĕ. Хăйсен çи-пуçĕпе те хăшĕ-пĕри «мода» куравĕ кăтартать.

Çакна та калас килет. Çамрăклах эрех-сăрапа, пируспа туслашакан яшкĕрĕмрен малашне мĕн кĕтмелле-ха? Çулсем иртнĕ май вĕсенчен йĕркеллĕ ашшĕ-амăшĕ пулайĕ-ши?

Хĕрарăм арçынпа тан праваллă тенипе те туллин усă курма пуçларĕç хĕрарăмсем паянхи пурнăçра. Сăнасан уявсенче уйрăмах сисĕнет çакă. Тепĕр арçынран та ытларах эрех ĕçме те, пирус паклаттарма та пултарать халĕ хăш-пĕр хĕрарăм тени. Уявсем хыççăн унта-кунта хĕрарăмсен йăваланса выртни те йĕркеллĕ пулăма куçма пуçларĕ. Нимĕн те калаймăн, аван пурăнатпăр! Ваттисем калашле халĕ ĕçе хăвалакан çук. Ĕç те çи, кӳп укçу-тенкӳ пулсан. Ма уяв кунĕсенче анчах тата, ытти кунсенче те. Сыпмалли-ĕçмелли пур пулсан кашни кунах уяв.

Уявсем чăннипех те культурăллă иртчĕр тесен ман шухăшпа уяв программисене пуçланса мĕн вĕçлениччен урамра та, лавккасенче те эрех-сăра пачах сутма чармалла. Урамсем те йĕркеллĕ те тирпейлĕ пулĕç, йĕрке сыхлавçисен те ĕç сахалланĕ. Хăнасен те кăмăлĕсем ырă туйăмсемпе тулĕç.

Хамăрăн обществăлла вырăнта пурин те сăпайлă пулмалли пирки манас марччĕ. Уйрăмах яшсемпе хĕрсен хăйсен чысне çӳллĕ шайра тытма тăрăшасчĕ. Ашшĕ-амăшĕн вĕсемшĕн пит хĕретмелле ан пултăрччĕ.

**И. МАЙКОВ.**

Кашмаш ялĕ.

# Аякри ялсене те тавар сутма тухаççĕ

Иртнĕ ĕмĕрте, 1950–1960 çулсенче, лавккасенче ĕçлеме сутуçăсене çăмăл пулман. Тавар çыртарса илме те район центрне 18 çухрăм таранах çуран утнă. Тепĕр кунне лашасем кӳлсе тавара тиесе илсе килнĕ. Лавккасем вăл вăхăтра йывăç çуртсенче (ампарсенче) вырнаçнăччĕ. Унта газ, çутă, кăмака пулманран хĕлле сивĕччĕ.

Хальхи вăхăта илес пулсан пирĕн тăрăхри Анатри Панкли ялĕнчи лавкка питĕ илемлĕн курăнса ларать. Шала кĕрсен те тирпейлĕх хуçаланать. Газĕ, çути, холодильникĕсем – пурте пур. Таварне те лавккана илсе килсех параççĕ.

Пирĕн лавккара вăй хуракан сутуçăсем – Надежда Александровна Максимовăпа Полина Васильевна Викторова – питĕ кăмăллă çынсем. Ыйтнă вăхăтра лавккара кирлĕ тавар çук пулсан çынсем мĕн ыйтнине çырса хураççĕ. Çийĕнчех кирлĕ таварпа тивĕçтерме тăрăшаççĕ. Вĕсем халăхран сĕт те пуçтараççĕ.

Эрнере пĕр кун аякри ялсене тавар сутма тухса çӳреççĕ. Пирĕн пĕчĕк яла та килеççĕ. Çакăн пек тухса çӳренипе унта пурăнакансем питĕ кăмăллă, уйрăмах пенсионерсем.

Лавкка пирĕншĕн пĕр-пĕринпе хутшăнмалли вырăн та пулса тăрать – хăйне май культура центрĕ. Унта пĕр-пĕрне курса калаçатпăр, çĕнĕ хыпарсем те пĕлетпĕр. Çакăн пек йĕрке тунăшăн Муркаш райпо ĕçченĕсене, уйрăммăн райпо ертӳçине Борис Васильевич Андреева тав тăватпăр.

**И. ЯКОВЛЕВ.**

Хурăнкасси ялĕ.

Православи кĕтесĕ

# Ыран – уяв: Иисус Христос Турă çап-çутă пулни

Тĕнне çирĕп тытакан пирĕн мăн асаттесем авалтанпах пĕр-пĕр ырă ĕçе Турра кĕлтуса, унран пилĕх ыйтса пуçланă. Çак ĕçсене вĕсем Турра хисеплесе чиркӳ уявĕсемпе çыхăнтарма тăрăшнă. Çак пулăма шăпах август уйăхĕнчи виçĕ Спас тĕслĕхĕ çинче ăнлантарма пулать. Кашни Спасĕ пысăк ĕçе пуçăнассипе, çĕнĕ тухăç пухассипе çыхăннă: пыл илессипе, пан улми татса пухассипе тата мăйăр пуçтарассипе. Çак виçĕ пысăк ĕçе пуçăнассине чиркĕвĕн пысăк уявĕсемпе çыхăнтарнă. Пыл пухассине – Таса Чĕрĕлĕх паракан Хĕресе йăтса çӳренин уявĕпе; пан улми татса пуçтарассине – Иисус Христос Турă çап-çутă пулнин уявĕпе; мăйăр пухма тытăнассине – Турă Амăшĕ ĕмĕр таса Хĕр Мария вилнин кунĕпе.

Пирĕн çак Спассем мĕнле уявсемпе çыхăннине пĕлмеллех, мĕншĕн тесен уявсем пĕлтерĕшлĕрех.

Православи Чиркĕвĕ ыран Иисус Христос Турă çĕнелсе улшăннă куна (Преображение Господне) – православи тĕнĕн чи пĕлтерĕшлĕ 12 уявĕнчен пĕрне – уявлать.

Иисус Христос Голгофа тăвĕ çинче хăйне пăталассине пĕлсе, унччен хăйĕн вĕренекенĕсемпе – Петр, Иоанн тата Иаков пулас апостолсемпе – Фавор тăвĕ çине улăхать. Вĕренекенĕсем ту патĕнчех сывăрса каяççĕ. Вăрансан вара вĕсем Иисус Христосăн пичĕ те, çи-пуçĕ те тĕлĕнмелле илемлĕн, хĕвел пек çуталса тăнине тата Вăл Моисейпа Илия пророксемпе калаçнине кураççĕ. Вĕсен куçне курăнман Турă Ашшĕпе Çветтуй Сывлăш Турри те çавăнтах пулнă.

Çакăн пирки Матфей çырнă таса Евангелире акă мĕн вулатпăр: «Пĕр улттă кун иртсен, Иисус Петра, Иакова, унăн шăллĕне Иоана хăйсене анчах илсе çӳлĕ ту çине улăхнă; унта Вăл вĕсен умĕнче урăх тĕслĕ пулнă: Унăн сăнĕ хĕвел пек çуталса кайнă; тумтирĕ шап-шурă, çап-çутă пулса тăнă. Çавăнтах вĕсене Моисейпа Илия курăннă, вĕсем Иисуспа калаçса тăнă. Çавăн чух Петр Иисуса каланă: эй Вĕрентекен, пире кунта тăма аван; кăмăлу пулсан, эпир кунта виçĕ хӳшĕ тăвар: пĕрне Сан валли, тепĕрне Моисей валли тата тепĕрне Илия валли, тенĕ. Вăл çапла каласа тăнă чухнех вĕсене çутă пĕлĕт сасартăк хупласа илнĕ; пĕлĕтрен тата: Çакă Манăн Савнă Ывăлăм, Манăн ирĕкĕм Ун çинче, Ăна итлĕр, тесе каланă сасă илтĕннĕ. Çакна илтсен, вĕренекенĕсем ӳпне ӳкнĕ, вĕсем пит хăранă. Иисус вара вĕсем патне пынă та, вĕсене сĕртĕнсе, каланă: тăрăр, ан хăрăр, тенĕ. Вĕсем куçĕсене уçса пăхсан, пĕр Иисусăр пуçне урăх никама та курман. Ту çинчен аннă чухне Иисус вĕсене каланă: халĕ мĕн курни çинчен Этем ывăлĕ Вилĕмрен чĕрĕлсе тăриччен никама та каласа ан кăтартăр, тенĕ».

Иисус Христос çапла çĕнелсе улшăнни хăйĕн пек шухăшлакансен шухăшĕсене çĕнетсе улăштарнипе пĕр тан килет. Лайăххи, ырри енне çĕнелсе улшăнма никам та нихăçан та кая юлманнине те пĕлтерет.

Çак кун вара чиркӳсенче çынсем яланах нумай. Вĕсем пан улмисене, грушăсене тата иçĕм çырлисене кĕлтуса тасатма илсе пыраççĕ. Çапла майпа çынсем Турăн ырăлăхне илеççĕ.



## Уяв сĕтелĕ çине – пан улми кукăлĕ

**Кукăль валли:**
1 кг пан улми,
150 г сахăр,
200 г ĕне çăвĕ е маргарин,
5 çăмарта,
2 чей кашăкĕ разрыхлитель,
600-700 г çăнăх.
**Крем валли:**
500 г хăйма,
150 г сахăр.

Малтан çупа сахăра хутăштармалла. Çăмарта хушса пăтратмалла. Унтан разрыхлительпе çăнăх хушса çăрмалла.

Пан улмие тасатмалла, варрине кăлармалла. Пĕчĕк касăксем пуличчен турамалла.

Противень илмелле те тĕпне çу сĕрмелле. Хатĕр чустан 2/3 пайне противень çине сармалла. Чуста çине туранă пан улми хумалла, тикĕслемелле.

Юлнă чустаран хăюсем тумалла та ăна сарнă пан улми çине тăваткал туса хурса тухмалла.

Кукăле малтан 180 градуса çити ăшăтнă духовкăра 30–35 минут пĕçермелле.

Крем валли хăймана сахăрпа хутăштармалла. Вĕри кукăле çиелтен çак кремпа сĕрмелле.

Кукăле сивĕнсен касмалла.

ГИБДД пĕлтерет

# Пассажирсен прависене хӳтĕлеме

Пассажирсен прависене хӳтĕлес тĕллевпе, автотранспорт водителĕсене дисциплинăна пăхăнмалли пирки тепĕр хут аса илтерме тата çул-йĕр çинчи аварийлĕ лару-тăрăва асăрхаттарас тĕллевпе августăн 3–16-мĕшĕсенче пирĕн районта «Автобус» операци иртрĕ.

Çул-йĕр çинчи юхăма хутшăнакансенчен автотранспорт пассажирĕсене паянхи куна чи хӳтлĕхсĕр категори теме пулать. Çул çинчи инкексене аманнисен тата вилнисен йышĕнче вĕсем пĕрре виççĕмĕш пайĕ чухлех. Нумай чух çакă пассажир лару-тăрăва хăй аллине илме пултарайманнипе тата хӳтĕленмелли майсемпе усă курманнипе çыхăннă. Пассажирсем хăрушсăрлăх пиçиххийĕсемпе тата минтерĕсемпе, транспорта ача-пăча валли хатĕрленĕ ятарлă хатĕрсемпе усă курма васкамаççĕ е вĕсен çакăн пирки информаци те сахалтарах. Çапла вара çул çинчи инкексенче сиен тӳсеççĕ.

Республикăра акă кăçалхи пĕрремĕш çур çулта кăна автобус водителĕсен айăпĕпе 54 инкек регистрациленĕ. Тепĕр майлă каласан çакă вăл çул-йĕр çинчи инкексенчен кашни вун пиллĕкмĕш инкекĕ. Вĕсенче 17 çын суранланнă, 1 çын вилнĕ.

Лицензиллĕ пассажир автотранспорчĕн водителĕсем пурĕ 7 инкек кăларнă. Сăлтавĕ – пысăк хăвăртлăх тата хирĕç килекен транспорт речĕ çине тухса кайни. Çак инкексенче пурĕ 9 çын суранланнă пулсан, пирĕн районти çакăн пек пĕр тĕслĕхре – икĕ çын.

Транспорт салонне пассажирсен палăртнинчен ытларах лартни, хăвăртлăх шайне пăхăнманни, çул-йĕр юхăмне хутшăнакан ытти транспорта е çуран çӳрекенсене çул паманни, автотранспорта техника тĕлĕшĕнчен йĕркеллĕ пăхса тăманни – çакă пулса тăрать те инкексен сăлтавĕ.

Çул-йĕр çинче пурин те тимлĕ пуласчĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн районти пайĕн пуçлăхĕ.**

Редакци почтинчен

# Шкула кайма хатĕрленеççĕ

Каникул вăхăчĕ иртсе пырать, каллех шкула кайма вăхăт çитет. Шкула каяс туйăм пĕрремĕш хут пĕрремĕш класа каякансен вăйлăрах пулĕ. Паянхи куна илсен пĕрремĕш класа каякана вулама пĕлни те кирлĕ. Çакна Шатракасси ялĕнче пурăнакан Степановсен çемйи аван туять.

Владимир Игоревичпа Татьяна Геннадьевнăн çемйинче кăçал паллă пулăм – вĕсен аслă хĕр ачи Дарья пĕрремĕш класа каять. Шкула кайма çине тăрсах хатĕрленеççĕ: çу вăхăтĕнче те ял библиотекине килсе кĕнекесем илеççĕ. Акă паян та библиотека алăкĕ уçăлса кайрĕ те сывлăх сунса пĕчĕк хĕр ача кĕрсе тăчĕ. «Эпĕ çĕнĕ кĕнекесем патне. Ку кĕнекесене вуласа тухрăм», – терĕ Даша. Кампа вулатăр тесе ыйтсан амăшĕ сывăрас умĕн кашни каçах кĕнеке вуласа панине каларĕ. Степановсен çамрăк çемйи ачасен воспитанийĕ çине тимлĕ пăхни çакăнтан та палăрать.

Чăн та çуллахи каçсенче кунĕпе ывăннă хыççăн кĕнеке вулама вăй та, чăтăмлăх та кирлĕ. Степановсем пысăк ĕç пуçланине шута илсен кĕнеке вулама вăхăчĕ те çук тенине ĕненме çăмăлрах пулмалла пек: пӳртне çĕнĕрен никĕс çине лартса пристрой хăпартнă ĕнтĕ, çивитти айне лартма та ĕлкĕрнĕ. Кунсăр пуçне ял çыннин пахчаран кĕме те вăхăт çук. Ачисене те пĕчĕккĕллех ĕçе хăнăхтарать çак çемье: Дарья амăшне тĕпел кукринче пулăшать, çӳп-çап пуçтарать, пилĕк çулхи Саша вара стройка таврашĕнче тăрмашать.

Шатракасси, Çеçмер, Кĕрекаç, Охтикасси ялĕсенче пурăнакан çамрăк вулавçăсене çуллахи каникул пĕтиччен библиотекăна час-часах çӳреме май пуррине аса илтерес килет. Кĕнекерен, хаçат-журналтан ан уйрăлăр. Библиотекăра сире кирлĕ пур кĕнекене те тупса паратпăр.

**И. ТАЙМАСКИНА,**
**Шатракасси ял библиотекин ертӳçи.**

# Кĕнеке – чун апачĕ, кĕнеке – пĕлӳ çăл куçĕ

Каникулти пĕр кун

Каникулта каннă чух та çак шанчăклă та ăслă тус яланах ачасемпе пĕрле пултăр тесе тăрăшатпăр. Çавăнпа нумаях пулмасть Ф. Васильев музейĕн ертӳçипе Надежда Яковлевăпа пĕрле эпир вулакансене вăрман уçланкине пуçтартăмăр.

Чăн малтанах ачасем вăрман пуянлăхĕпе тата асамлăхĕпе паллашрĕç: йывăç-курăка, хурт-кăпшанкăсемпе кайăксене сăнарĕç. Кунта пысăк кăткă тĕммине курчĕç, çӳллĕ курăк хушшинче вара кайăк чĕппине асăрхарĕç. Вĕçме вĕренекен илемлĕ кайăка алла тытма йывăрах пулмарĕ. Çерçирен пысăкрах, хӳри вăрăмрах, сăмси сарă тĕслĕ. Ку вăл чие кайăкĕ пулчĕ мĕн. Ачасем ăна пăхса киленчĕç, унпа сăн ӳкерĕнчĕç.

Хыççăн вара ачасем икĕ ушкăна пайланса командăсем йĕркелерĕç. Вĕсем ăс-тăн çивĕчлĕхне тĕрĕслерĕç, спорт вăййисенче вăй виçрĕç.

Библиотека ертӳçи пулнă май эпĕ ачасене юратнă юмах кĕнекисем тăрăх çул çӳреве илсе тухрăм. Вĕсем тĕрлĕ ытарлă ыйтусем çине хурав пачĕç, пуçватмăшсемпе тупмалли юмахсен тупсăмĕсене шырарĕç. Надежда Яковлева спорт вăййисене йĕркелерĕ, ачасем вара унта хаваспах хутшăнчĕç.

Çак чун уявне вĕçличчен ачасене библиотекăра «Кĕнеке алăра – çĕнĕ пĕлӳ пуçра» ятпа хатĕрленĕ информаци хучĕсем валеçсе патăмăр. Библиотекăна кĕнекесемпе хаçат-журнал вулама пыма чĕнсе каларăмăр.

**А. ДИМИТРИЕВА,**
**Йӳçкассинчи библиотека ертӳçи.**

# Среднее профессиональное образование в Чебоксарском кооперативном институте

**Среднее профессиональное образование является важной составной частью российского образования. Оно обеспечивает подготовку специалистов-практиков, работников среднего звена для всех отраслей экономики. Чебоксарский кооперативный институт (филиал) Российского университета кооперации, в соответствии с лицензией Федеральной службы по надзору в сфере образования и науки на осуществление образовательной деятельности (приложение №22.3 от 24 мая 2011 г. №1331), приказ №913 от 23 июля 2012 г., впервые в Чувашской Республике приступил к внедрению системы непрерывного образования, включающую в себя среднее профессиональное образование для выпускников 9 и 11 классов и высшее образование по программам бакалавриата и магистратуры. По окончании среднего профессионального образования выпускники имеют возможность получить высшее профессиональное образование по сокращенным программам профильной специальности. Завершая обучение по полному циклу, выпускники Чебоксарского кооперативного института имеют возможность получить три диплома: диплом о среднем профессиональном образовании, диплом бакалавра и диплом магистра.**




***В чем преимущества среднего профессионального образования в институте?***

**- легко поступить – вы не сдаете единый государственный экзамен!**

**- фундамент знаний для дальнейшего обучения в ВУЗе вы получаете на материально-технической базе института;**

**- гибкая ориентация на практику;**

**- востребованность специалистов на рынке труда.**

***Среднее профессиональное образование в Чебоксарском кооперативном институте – это:***

**- высокий процент остепененных преподавателей, докторов и кандидатов наук;**

**- развитая научно-исследовательская деятельность;**

**- возможность продолжить образование в стенах родного ВУЗа и в сокращенные сроки;**

**- студенческая жизнь на 100%.**

***Специальности среднего профессионального образования:***

**- Право и организация социального обеспечения**

**- Реклама**

**- Социальная работа**

**- Банковское дело**

**- Экономика и бухгалтерский учет (по отраслям)**

**- Страховое дело (по отраслям)**

**- Организация обслуживания в общественном питании**

**- Коммерция (по отраслям)**

**- Товароведение и экспертиза качества потребительских товаров**

**- Информационные системы (по отраслям)**

**- Прикладная информатика (по отраслям)**

**- Технология хлеба, кондитерских и макаронных изделий**

**- Технология мяса и мясных продуктов**

**- Технология продукции общественного питания**

**Условия зачисления – по результатам ГИА, ЕГЭ и собеседования.Заявления принимаются до 15 сентября 2012 года.**

**Контакты приемной комиссии:**

**Адрес: 428025, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр. М. Горького, д. 24.**

**Телефон приемной комиссии: 8(8352) 41-98-35, 48-57-31, 8-903-345-57-31.**

**Электронная почта: abelov@rucoop.ru- приемная комиссия.**

Пирĕн почтăран

## Çĕр-шыва хӳтĕлесси – числă тивĕç

Çарта службăра пуласси – сывлăхлă кашни яш кĕрĕмĕн числă тивĕçĕ. Авалтан пыракан çак чăнлăха никамах та хирĕçлеймест пулĕ.

2012 çулхи çуркуннехи призыв нумай пулмасть кăна вĕçленчĕ. Кăçал Шетмĕпуç ял тăрăхĕнчи ялсенчен 3 çамрăка Раççей Федерацийĕн Хĕç-пăшаллă Вăйĕсен ретне службăна ăсатрĕç. Кусем вĕсем Катăкуйĕнчи Димитрий Папейкинпа Алексей Кириллов тата Шетмĕпуçĕнчи Александр Петров.

Авалхи йăлапа яшсем хăйсен юлташĕсемпе ялсем тăрăх рекрут юррисене юрласа çӳрерĕç, хăйсем кĕрсе тухакан кил хуçисене ăсату каçне йыхравларĕç. Кил хуçисем вара кам кĕпе тăхăнтартать, кам хул пуççи урлă вăрăм ал шăлли уртса ярать. Юлашки вăхăтра вара укçан парахансем те çук мар.

Çак кунсенче хăйсен çар тивĕçне пурнăçлакан яшсене тепĕр çулталăкран ашшĕ-амăшĕ, тăванĕсем, паллах ĕнтĕ чун савниĕсем те вĕсене хавас та ырă кăмăл-туйăмпа кĕтсе илĕç.

**В. ЛЕОНИДОВ.**

Çул çӳрев

## Шуршăлта пултăмăр



Тĕнчере пĕрремĕш хут Совет Союзĕн летчик-космонавчĕсем А. Николаевпа П. Попович тĕнче уçлăхĕнче «Восток – 3», «Восток – 4» карапсемпе пĕрлехи вĕçев ирттернĕренпе 50 çул çитнĕ май Каршлăхри интернат çуртра пурăнакансемпе унти ĕçченсем Шуршăлти космонавтика музейĕнче пулса курчĕç.

Чăвашăн мухтавлă та паттăр ывăлĕн А.Г. Николаевăн ĕç-хĕлне паян кунччен тĕрĕс-тĕкел упракан кĕтес пурне те кăсăклă пулчĕ. Ăна халалланă космонавтика музейĕ тĕрлĕ экспонатпа питĕ пуян. Кашни çӳлĕкре, кĕтесре хăйне майлă вăрттăнлăх упранать, йăлтах Андриян Григорьевич кун-çулĕпе çыхăннă. Кунти шайлашулăх космос уçлăхне аса илтерет, экспонатсенчен ытларах сенкер тӳпе сăнарĕ мала тухать. Вĕçеври тĕрлĕ тĕллевпе усă курнă тумтир тата унпа çыхăннă ытти япала кунта килекен кашни çыннăн интереслĕ.

Иккĕмĕш залра космос паттăрĕ пĕрремĕш вĕçев хыççăн Шупашкар хулин урамĕсемпе иртнĕ хура тĕслĕ ЗИС автомашина мăнаçлăн ларать, вăл тĕрĕс-тĕкел упранать. Уçлăхри ăнăçлăх космос паттăрне хавхалантарни, вăл ентешĕсемшĕн тунсăхлани, вĕсене хапăл туни сăн ӳкерчĕкре аван курăнать.

Юнашар залра ветерансем видеоролик пăхрĕç, çакăн хыççăн вĕсене планетари кĕтрĕ. Музей ĕçченĕсем А.Г. Николаев çуралса ӳснĕ пӳртпе тата ăна пытарнă часавайпа паллаштарчĕç. «Эпĕ тăташах Шуршăл ялне тĕлленетĕп», – çакăн пек шăрçаланă Андриян Григорьевич.

Ку çул çӳрев яланах асра юлĕ.

**В. КРЮЧКОВА, социаллă ĕçчен.**

Ял хуçалăхĕ

# Мĕн акнă-ши?

«Мĕн акатăн – çавă шăтать», – теççĕ халăхра. Шăтнине пуçтарса илес ĕçсем пыраççĕ. Анчах мĕн акса хăварнăха хуçалăхсенче?

«Россельхознадзорăн» республикăри управленийĕн специалисчĕсем кăçалхи 6 уйăхра кăна вăрлăх тĕрĕслевĕ енĕпе 90-а яхăн мероприяти ирттернĕ, прокуратура тĕрĕслевĕсене те хутшăннă.

Çавна май йĕркене пăснă 136 тĕслĕхе шута илнĕ. Нумай чухне хуçалăхсем сортне палăртман вăрлăх акнă, вăл йышăннă требованисемпе те килĕшсе тăман, вăрлăх шăтаслăхне тĕрĕслеттерменни те тĕл пулнă. Селекци çитĕнĕвĕсен патшалăх реестрне кĕртмен сортсен вăрлăхĕсене сутнă тĕслĕхсем те çиеле тухнă.

Аслă патшалăх инспекторĕ Валентина Никитина каланă тăрăх хăш-пĕр районта çирĕплетнĕ аслă апробаторсем («Россельхозцентр» ФПУ-н Чăваш Енри филиалĕ палăртать) тĕрĕслевсем ирттермен. Саккунсем тăрăх ятарлă курссенче пĕлӳ пухса аккредитаци илнĕ çын та асăннă тĕпчевсене ирттерейрет. Çав шутра ял хуçалăх предприятийĕн специалисчĕ те. Акни нормативлă документсемпе килĕшсе тăрсан апробаторăн ятарлă акт (апробаци е регистраци акчĕ) çырмалла. Сутлăх валли акнă калчана тĕпчесе пĕтĕмлетӳ туни кирлĕ. Хуçалăхра усă курас тенине регистрацилени те çителĕклĕ.

Шăтаслăха вăрлăха анализ туса палăртаççĕ. Ку ĕçе вăрлăх инспекцийĕсем, çавăн пекех аккредитациллĕ çынсем пурнăçлаççĕ.

Сорт тата ака пахалăхĕсене «Ял хуçалăх ӳсен-тăранĕсен вăрлăхĕсем. Сорт тата ака пахалăхĕсем» («Семена сельскохозяйственных растений. Сортовые и посевные качества») Р 52325-2005 номерлĕ патшалăх стандарчĕпе (ГОСТ) палăртаççĕ. Çĕр улмин вăрлăхĕ тĕлĕшпе – «Вăрлăх çĕр улми. Техника условийĕсем» («Картофель семенной. Технические условия») Р 53136-2008 номерлĕ патшалăх стандартне пăхăнмалла.

Апробаторсене тата проба илекенсене аккредитацилессин йĕркине РФ Ял хуçалăх тата суту-илӳ министерствин 1999 çулхи октябрĕн 6-мĕшĕнчи 690-мĕш хушăвĕпе çирĕплетнĕ.

Çĕр-шыври апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕшĕн яваплăха туйса ĕçлекен асăннă служба специалисчĕсемшĕн хуçалăхсем апробаци ĕçне тĕрĕс ирттерни пĕлтерĕшлĕ. Ку енĕпе саккунсене пăснăшăн административлă майпа явап тыттарса штраф тӳлеттереççĕ.

# Тĕрĕс упрама пĕлмелле

Вырма ĕçĕсем пыраççĕ, кĕлетсем тыр-пулпа, пахча çимĕçпе тулаççĕ. Тухăça сая ярас мар тесен вĕсене мĕнле упрамалли пирки сăмах пуçараççĕ «Россельхознадзорăн» республикăри управленийĕн специалисчĕсем.

Чи малтанах кĕлетсене сиен кӳме пултаракан хурткăпшанкăран тата чире яма пултаракан микробсенчен тасатмалла. Вăрлăх пăсăласран, унăн пахалăхĕ чакасран тата шăнасран партисене культурăна, сорта, категорие пайласа уйрăмшар хурсан аван. Сывлăш температури тата нӳрĕклĕх виçеллĕ кирлĕ.

Çу тата эфир çăвĕ пур культурăсен куписен çӳллĕшĕ 1,5 метр, тырă тата пăрçа йышши культурăсен 2 метр пулмалла. Упрарва витĕр вĕрекен çил пулсан тырра тата пăрçа йышши культурăсен куписене 3 метр çӳллĕш таран тăрăлама юрать.

Михĕсенче упрас тесен йывăç хăмасем (урайĕнчен 15 сантиметртан кая мар çӳлерех пулмалла) çинче пĕрпĕрин çине хумалла. Михĕсене стенаран 70 сантиметр айккинче упрамалла. Вĕсене мĕн сарлакăш тата çӳллĕш купалама юранине патшалăх стандартĕнче палăртнă. Купасен хушши 1,5 метртан кая пулмалла мар. Михĕсене купалассине тата тиессине механизациленĕ пулсан 2,5 метр хушă хăвармалла.

Паха çĕр улми вăрлăхне контейнерсенче е стеллаж çинче упрамалла, элита йышне кĕртнисене те контейнерсене тултарсан аван. Специалистсем сапаласа выртармa та юрать теççĕ. Кашни парти тĕлĕшпе хуçалăх тата культура ятне, йывăрăшне, ботаника сортне, категорине, номерне, çавăн пекех пахалăх паллине çирĕплетекен документ номерлĕ ярлык çакмалла. Кашни контейнер çинче кунашкал паллă кирлĕ. Çĕр улми вăрлăхне 1,5 метр çӳллĕш, 20 метр тăршшĕ купаласа, çиелтен витсе, витĕр çил вĕрмелле вырнаçтарса тепĕр çул валли хăварма пулать.

Хими япалисемпе сиенсĕрлетнĕ вăрлăха уйрăм пӳлĕмре санитари правилисене пăхăнса тытмалла. Ăна урайĕнче, çавăн пекех фуражлăх тырăпа хумалла мар. Пĕрре сиенсĕрлетнĕ пулсан тепĕр хут ку ĕçпе аппаланмалла мар.

**Надежда ВАСИЛЬЕВА, Раççейри ял хуçалăх надзорĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн специалисчĕ.**



# Сывлăхлă пулар!



Чир-чĕре хирĕç

## Иммунитета çирĕплетме вăхăт

Организм чир-чĕре хирĕç çирĕппĕнех кĕрешме пултарассинче иммунитет вăйлă пулни пĕлтерĕшлĕ. Çавăнпа та ăна хавшама памалла мар.

Иммунитета çирĕплетмелли майсем чылай. Апатçимĕç енне илес пулсан та организм вăйне ўстермелли продуктсем çут çанталăкра сахал мар. Анчах та эпир çакна шута илместпĕр. Хăнăхнă пек апатланатпăр та – пулчĕ те. Кайран вара, уйрăмах кĕркуннерен пуçласа, «иммунитет хавшанă пулас» тесе ўпкелешетпĕр.

Иммунитета вăйлатакан продуктсем пирки калаçнă чух эпир пахча çимĕçпе улма-çырлана пĕр тăхтамасăрах асăнма пултаратпăр. Апла пулсан вĕсен усси пирки тĕплĕнрех пĕлер.

Иммунитет шайне хăпартма пултаракан продуктсем организма питĕ кирлĕ. Вĕсен шутне, сăмахран, çаксем кĕреççĕ: брокколи, кишĕр, сĕтрен хатĕрленĕ продуктсем (вăл шутра биохутăшсемпе усă курса хатĕрленисем те), çĕр çырли, киви, кавăн, лосось, кедр мăйăрĕ, олива çăвĕ, кăрккa ашĕ, цитрус, петрушкăпа укроп çулçисем, серте çулçипе тымарĕ, кабачок, патиссон.

Пулă çăвĕнчи тата тинĕс продукчĕсенчи çăра мар çу кислотисем çирĕп иммунитет тума пулăшакан «строительство материалĕ» вырăнĕнчех. Анчах та акă мĕн асра тытмалла: çак продуктсене пĕçерни чухне вăрах вăхăт хушши çулăм çинче тытни организма кирлĕ çу кислотисене пĕтерет. Çавăнпа та пулăна çу çинче ăшаласси пирки мансан та лайăх: ăна пăспа хатĕрлесен усси ытларах пулĕ. Путенен чĕрĕ çăмарти иммунитета вăйлатма май паракан веществосемпе пуян.

Ку тĕлĕшпе пулăшакан витаминсем пирки калас пулсан, паллах, чĕрĕ те таса улма-çырла, пахча çимĕç часчасах çини усă кўрет. Çавăнпа та хăш-пĕр чирсене хирĕç кĕрешнĕ чухне апатланасси пирки врачпа канашласа илни (иммунолог пулсан аванрах) ытлашши пулмасть.

Иммунитетăн тĕп пулăшаканĕ – С витамин. Лимон, купăста – акă ăçта нумай вăл. Аптекăрисенчен вара – «аскорбинка».

Ўт-пў хусканăвĕ

## Сурансем ан пулччăр



*Спорт занятийĕсене хутшăннă чухне кăна мар, хамăр тĕллĕн тĕрлĕ хусканусем тунă чухне те, сăмахран, фитнесра та, кирек мĕн ыраттарма пултаратпăр. Сурансем пуласран асăрхансах тăмалла.*

*Хăвăрт утас енĕпе тĕнче чемпионĕ Вера СОКОЛОВА панă сĕнўсем вулакансемшĕн вырăнлă пуласса шанатпăр. Вĕсем физкультура занятийĕсенче тĕрлĕ сурансенчен пăрănма та, занятисене усăллăрах ирттерме те пулăшĕç.*

Спорт занятийĕсене çўреме суйланă кроссовкисем е кедăсем сире кĕлеткене тўрĕ тытса тăма пулăшчăр, хăйсен çирĕплĕхĕпе урасене чалăшассинчен сыхлачăр.

Эсир тренировкăсене çўреме тин кăна пуçланă пулсан чĕрепе юн тымарĕсен тытăмĕн ĕçне лайăх витĕм кўрекен хусканусем çине, сывлав органĕсен тата ўт-пў авăнма пултарни çине ырă витĕм кўрекен хусканусем çине тимлĕх ытларах уйăрăр.

Спорт занятийĕсене тăтăшах çўремелле. Унсăрăн эрнере пĕр хутчен организм хăнăхман хусканусем тунă чух сурансем пулма пултарас хăрушлăх ўсет.

Организмшăн ўт-пў тĕлĕшĕнчен йывăр физкультура занятийĕ умĕн малтанах мышцăсене кăшт çемçетсе илмелле.

Физкультура занятийĕсене, сăмахран, чупассине асфальт сарнă вырăнта мар, тўрĕ çĕр лаптăкĕ çинче ирттерме тăрăшмалла.

Хусканусем тунă чухне ўкес хăрушлăх пур пулсан ятарлă хўтлĕх хатĕрĕсемпе усă курăр.

Хусканусене тўрех йывăрлатма кирлĕ мар, вĕсен кăткăслăхне майĕпен ўстерсе пымалла.

Тренировка хыççăн мышцăсене тўрех сивĕнме памалла мар, вăраххăн тата темиçе хускану тумалла.

Организм çине йывăрлăх ытлашши «тиемелле» мар. Мĕн те пулин ыратнă чухне занятсене çўременни вырăнлăрах. Хусканусем ыратнине татах та çивĕчлетме пултараççĕ кăна.

Мышцăсем çине массаж туни, мунча кĕни те лайăх витĕм кўрет. Çапла вара сире врач вĕри мунчара çăвăнма чарман пулсан мунча кĕни те вырăнлă.

## Сывлăха тĕрĕслеме – сывлăх центрне

Медицина страхованийĕн полисĕллĕ кашни ача ача-пăча сывлăх центрне тĕрĕслеве кайма пултарать. Ачан центра ашшĕпе е амăшĕпе каймалла, унсăрăн врач ача пирки тулли информаци илме пултараймасть. Ачан сывлăхне тĕрĕслесси вăрах вăхăта пымасть: тулли медицина тĕрĕслевĕ хĕрĕх минутран пуçласа сехет çурă таран тăсăлма пултарать. Ача-пăча сывлăх центрне маларах телефонпа е электронлă регистратура урлă çырăнмалла.

Тĕрĕслевре илнĕ юн анализĕнче сахăрпа холестерин шайне палăртаççĕ. Ачан çўллĕшĕпе кĕлетке йывăрăшне палăртнă чух врач ачан аталанăвĕ мĕнле пынине пĕлтерет. Алăсен вăйне, тўсĕмлĕхе, кĕлеткери çу хулăнăшне, организмри энерги ылмашăвĕ мĕнле пулса пынине, юн пусăмне, юнра кислород мĕн чухлине тата ытти нумай тĕрлĕ тĕрĕслевсем ачан сывлăхĕ пирки тулли ўкерчĕк туса параççĕ. Ятарлă тестсем вара ача вăрттăн пирус туртнине те тупса палăртма пултараççĕ. Центрта стоматологи тĕрĕслевне те ирттереççĕ.

Тĕрĕслевсенче çырса пани пĕтĕмпех электронлă карттăна пухăнса пырать. Юлашкинчен педиатр çав сведенисем тăрăх ачан сывлăх шайне палăртса уйрăм сĕнў-канашсем парать. Ашшĕ-амăшĕн те, паллах, врачсене ыйтусем пама вăтанса тăмалла мар: калаçу сирĕн ачăрăн сывлăхĕ пирки-çке-ха.

Пирĕн республикăра ача-пăча сывлăх центрĕ иккĕ. Вĕсем республика ача-пăча клиника больницинче (Шупашкар хули, Осипов урамĕ, регистратурăн телефон номерĕ 55-18-53). Тепри – 3 № хула ача-пăча больницинче. Вăл Шупашкарти Трактор тăвакансен проспекчĕ, 12 çурт адреспа вырнаçнă (поликлиникăн 1 хутĕнче). Регистратурăн телефон номерĕсем: 23-58-43, 64-88-16. Республика Сывлăх сыхлавĕн министерствин ятарлă хушăвĕпе килĕшўллĕн пирĕн районти 6 çул тултарнă – 18 çулччченхи ачасене шăпах та 3 № хула ача-пăча больницинче вырнаçнă центр йышăнать. Тĕрĕслев тўлевсĕр.

Центра çыраннă хыççăн унта кайма çак документсем кирлĕ пулаççĕ: ашшĕ-амăшĕн паспорчĕ, 14 çултан иртнĕ ачасен паспорчĕпе копийĕ, страхланин полисĕ тата унăн копийĕ, çурални çинчен ĕнентерекен хут, пеленка, бахиласем.

**М. САВЕЛЬЕВА, райпедиатр.**

## Курав урлă та – спорта

*Çак тата ытти сăн ўкерчĕксене эсир Муркашри тури чăвашсен музейĕнче курма пултаратăр. Çирĕм çул ытла спорта çĕнĕ ятсем кăларассипе тимлекен Эдуард Гордеев тренер (сăн ўкерчĕкре хăйĕн воспитанникĕсемпе пĕрле) хатĕрленĕ сăн ўкерчĕксен куравĕнче спортсменсен тата тренерсен ĕçри саманчĕсене сăнлакан сăн ўкерчĕк чылай. Эдуард Александрович ачасене йĕлтĕр спортне ытларах явăçтарма тăрăшнăран кураври сăн ўкерчĕксенче ытларах хĕллехи самантсем. «Кроссовки тăхăнман вăхăтра та, йĕлтĕр сырман вăхăтра та спортпа физкультура пурнăçра кашниншĕнех питĕ пĕлтерĕшлĕ пулнине кăтартас килчĕ», – çапла пĕлтерчĕ тренер курава усна май. Интереслĕ сăн ўкерчĕксем курма музея килĕр.*

**Т. ЕРМОЛАЕВА, музей ертўçи.**



## Пахча çимĕçе те, улма-çырлана та çуса çимелле

Врач канашĕ

**Августпа сентябрь уйăхĕсем – пахча çимĕçпе тата улма-çырлапа пуян уйăхсем. Кунпа пĕрлех çак вăхăтра вар-хырăм чирĕсемпе чирлекенсем ытларах. Паян çак чирсем пирки тĕплĕнрех Муркашри тĕп больницăри эпидемиолог врачпа Г. СОКОЛОВĂПА калаçатпăр.**

**– Галина Георгиевна, вар-хырăм чирĕсемпе чирлес мар тесен хальхи вăхăтра мĕнле асăрханмалла?**

– Чăнах та август-сентябрь уйăхĕсем пахча çимĕçпе, улма-çырлапа питĕ пуян. Лавккасенче, пасарта та вĕсене сутакансем çак вăхăтра уйрăмах нумай. Илес текен çын тата çимĕçне те тутанса пăхсах илме тăрăшать. Халĕ шăпах арбуз тата дыня вăхăчĕ.

Анчах çуман пахча çимĕçе тата улма-çырлана çини часах вар-хырăм чирĕсемпе, А вируслă гепатитпа, тĕрлĕрен гельминтоз чирĕсемпе аптăрама пултарни пирки часчасах манатпăр. Çуман укроп-петрушка тата апатланнă чух усă куракан ытти симĕс курăк пирки те çаках каламалла. Çитменнине çак вăхăтри çанталăк условийĕсем те асăннă чирсен вирусĕсене пурăнма лайăх майсем туса параççĕ.

**– Вар-хырăм чирĕсенчен хăшĕ ытларах сарăлнă?**

– Чи анлă сарăлнă вар-хырăм чирĕ – дизентери. Ăна пуçарса яракансем – шигеллсем. Ытларах Зонне тата Флекснер шигеллĕсем вархырăм лекнипе пуçланнă чирсене сиплеме тивет. Зонне шигеллĕсем организма лексе чирлеттерсен аслисем медицина пулăшăвĕсĕр те ăна сиплесе ирттерсе яма пултараççĕ. Анчах та çак вирус питĕ "пурнăçа юратаканскер". Вăл хăйма, тăпăрч, турăх тата ытти хăш-пĕр çимĕçре уйрăмах аван ĕрчет.

Флекснер вирусĕ вара вар-хырăма темиçе кăна лексен те вăйлă аптăратма пултарать. Ытларах чух шыв пăрăхĕсем кивелнĕ, пăрăхсенчи пусăм ялăх пулсан тата шыв парасси пĕр тикĕссĕн пулса пымасан çак шигеллсем организма лекес хăрушлăх тухса тăрать.

**– Вар-хырăм чирĕсем ан ерччĕр тесен мĕн тумалла?**

– Вар-хырăм чирĕсене пуçарса яракан вируссем организма ан лекчĕр тесен алăсене супăньпе çăвассине çирĕп йĕркене кĕртмелле, уйрăмах апатланас умĕн, тула тухса кĕнĕ тата урамра пулнă хыççăн.

Çуман чĕрĕ пахча çимĕçе е улма-çырлана çини тăпрара пур гельминт çăмартисене ертме пултарать. Сливăна, пан улмине кăшт шăлса тасатнă хыççăнах çиетпĕр. Тепĕр темиçе сехетрен вара вархырăм ыратни çак йăнăш пирки аса илтерет. Ирĕксĕрех эмел илме васкамалла пулать.

Гельминтозсенчен аскаридоз, энтеробиоз тата токсокароз чирĕсем кĕске вăхăтрах пуçланма пултараççĕ. Аскаридоз хăйĕн çинчен хăсас килнипе, аппетит япăхланнипе, вар-хырăм ыратнипе пĕлтерет. Уйрăмах ачасем çак чире йывăррăн чăтса ирттереççĕ. Çитменнине тата вĕсен сывлăхĕ хавшать. Ачасем япăхрах вĕренме, кансĕр çывăрма пуçлаççĕ. Ăс-тăн тата ўт-пў аталанăвĕ те кирлĕ шайра пулса пымасть.

Çавăнпа та вар-хырăм чирĕсене сывăха ярас мар тесен пахча çимĕçе, улма-çырлана яланах çумалла. Час пăсăлакан çимĕçсене холодильникра тытмалла. Арбузпа дыньăна та сĕтел çине касса хуриччен тĕплĕ çумалли пирки асрах тытмалла.

**Редакцирен:** «Сывлăхлă пулар!» страница малашне уйăхра пĕрре тухма тытăнать. Сирĕн сĕнĕвĕрсемпе ыйтусене 62-1-38 номерлĕ телефонпа кĕтетпĕр. Страницăна Наталия НИКОЛАЕВА ертсе пырать.

Ку кăларăма хатĕрленĕ чухне Интернет ресурсĕсемпе усă курнă.

# Кил тата хушма хуçалăх



## Ашшĕне ывăлĕ пулăшать

«Герой» ял хуçалăх предприятийĕн утарне пынă самантра Владимир Михайлов тата унăн ывăлĕ Алеша вĕллесене хĕле хатĕрлес ĕçпе тимлетчĕç. Вăл вăхăтра çанталăк ăмăрланнăччĕ те вĕсен манпа пĕр самант калаç-ма вăхăчĕ тупăнчĕ. Аванах ăнланатăп, сакăр вунă ытла çемьене тĕрĕс-тĕкел пăхса тăрас пулсан кашни минучĕ хаклă.

– Асатте-асанне, аттеанне ĕçне, пилне малаллах тăсас тетпĕр, – пуçарчĕ калаçăва ăста утарçă Владимир.

Унăн ачалăхĕ, яшлăхĕ, тĕрĕсрех каласан ку таранччenхи пурнăçĕ, йăлтах хурт-хăмăр отраслĕпе çыхăннă. Пĕчĕк чухне вара вăл час-часах вĕллере ларнă, вылянă, çывăрнă. Ашшĕ-амăшĕ вара тăтăш утарта тимленĕ. Çавăнта пĕчĕкскер аслисем мĕн ĕçленине пăхса ларнă. Усерехпе майĕпен çак отрасль енелле туртăнма пуçланă. Утарта пĕчĕк пулăшуçă та питĕ кирлĕ, кунта ахаль





çын ăнланман тата куçа курăнман ĕç те темĕн чухлех. Вĕлле хурчĕ выльăх мар, ăна кашни кун пăхас çук тейĕ хăшĕ-пĕри. Кирек епле ĕçе те вара хăй вăхăтĕнче туса ĕлкĕрни тупăш илессипе, вĕсем ăнăçлă хĕл каçассипе çыхăннă.

Михайловсен çемйинче пилĕк ача ӳссе çитĕннĕ, хурт-хăмăрпа тимлекенни вара Владимир кăна. Ку утарта унăн ашшĕ хĕрĕх çул тимленĕ. Аслашшĕ-асламăшĕ те утарçăсем пулнă. Утарçă династийĕ тетпĕр вĕсем пирки. Çавăнпа та хисеплĕ ята çĕре ӳкерес мар тесе кунне-çĕрне пĕлмесĕр тимлет утарçă.

– Çуркунне пĕр вăхăт омшаник ытлашши ăшăнса каять, çавăнпа алăксене каçпа уçса хуратпăр, ирхи тăватă сехетре килсе хупатпăр, – тет вăл кашни самантпа тĕрĕс-тĕкел усă курма тăрăшнине палăртса.

Пĕр самант маншăн питĕ кăсăклă пек туйăнчĕ, вăхăтне епле çитерет-ши тесе тĕлĕнтĕм. Кашни кун утарта мĕн ĕçленине, çанталăк мĕнле пулине тата çакăнпа çыхăннă ытти самантсене йăлтах ятарлă календарь çине çырса пырать хĕрĕх çул урлă каçнă Владимир. Çакна вăл тахçанах çырса пынă. Çавăнпа та вăл тĕплĕ те тирпейлĕ çын пулни, йăхран йăха пыракан ĕçе питĕ хаклани пĕрре курсах палăрчĕ. Ал çырăвĕн пĕлтерĕшĕ вара мĕнре-ха тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Асатте аттене вĕрентнĕ, эпĕ ăсталăха аттерен илтĕм, хам ывăла та çак ĕçе тĕпĕ-йĕрĕпе вĕрентесшĕн. Вăхăтпа тĕрĕс те вырăнлă усă курма вĕрентĕр. Утарта кашни самант пысăк пĕлтерĕшлĕ, – терĕ вăл.

Ашшĕне амăшĕ утара вăхăтран вăхăта килсе пăхать – ара вĕсен ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайĕ çакăнта иртнĕ вĕт. Аслисен кашни сĕнĕвĕ вырăнлă. Ахальтен каламаççĕ вĕт халăхра ватă çын тăвата çын тесе. Унччен маларах Петр Степанович тимленĕ иккен ку утарта.

Хушма хуçалăх тытма та вăхăт тупать утарçă. Хĕлле вара вăл строительство ĕçĕпе тимлет, хваттерсене хăтлăх кĕртет. Апрель уйăхĕ çитсен утара çул тытать.

Утара пыл ытларах пухма май паракан лаптăка куçарассине вăя кĕртмен-и тесе кăсăклантăм эпĕ.

– Юлашки тапхăрта хурт-хăмăр отраслĕпе ĕçлекенсем йышлансах пыраççĕ. Кунта йĕри-тавра пысăк утарсем вырнаçнă, çавăнпа та ун пек тума май килмест, – терĕ вăл калаçăва вĕçлене май. Эпĕ те утарçăн хаклă вăхăтне «вăрлас» темерĕм.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕксенче: Владимир Михайлов тата унăн ывăлĕ Алеша; кĕрхи утарта.**

## Кредит аталанма май парать

Райадминистрацин экономика тата агропромышленноç комплексне аталантарассин пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх ял çыннисем килти хушма хуçалăха аталантарма çăмăллатнă кредитсем илесси чакмасть.

2006 çултанпа – «АПКна аталантарасси» наци проекчĕ вăя кĕме пуçланăранпа районти кашни 3-мĕш кил хуçи кредит илнĕ. Пĕтĕмпе 4132 кредит панă, 670,9 миллион тенкĕлĕх.

Ял çыннисем кредит укçи-тенкипе выльăх-чĕрлĕх сарайĕсем тăваççĕ тата çĕнетеççĕ, тĕрлĕ ял хуçалăх техники туянаççĕ.

Кăçалхи кăтартусене уйрăммăн пăхса тухар. Январь – июль уйăхĕсенче 406 кредит панă, 78 миллион та 385 пин тенкĕлĕх. Банксемпе пăхсан ӳкерчĕк çапла: Раççей Ял хуçалăх банкĕ – 162 кредит 35 миллион та 521 пин тенкĕлĕх, Перекет банкĕ – 244 кредит 42 миллион та 864 пин тенкĕлĕх.

Уйрăмах Оринин (42 кредит), Муркаш тата Катькас (40-шер кредит), Çатракасси (39 кредит) ял тăрăхĕсенче пурăнакансем кредитсемпе анлă усă кураççĕ. Çав хушăрах Уйкас Янасал ял тăрăхĕнче пурăнакансем пĕтĕмпе те 10 кредит çеç илнĕ.

Манăр мар, паянхи саманара кредит майĕсемпе усă курмасăр аталанма йывăр. Телее процент виçисене патшалăх саплаштарать. Апла пулсан ял çыннисен хăюллăрах та, пуçарулăрах та пулмалла. Кредитпа хушма хуçалăха та çирĕплетмелле, çемье тупăшне те ӳстермелле.

**Т. ИВАНОВ.**

## Хурт-хăмăр ĕрчетесси – сăваплă

Хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç мĕн авалтанах сăваплă ĕç шутланнă. Ку отрасльти продукци вара хаклă та паха тата тупăшлă, енчен те ку ĕçе кирлĕ вăхăтра пысăк тимлĕх уйăрас пулсан. Анчах та хурт-хăмăртан пысăк пахалăхлă продукци ытларах илесси утарçăран кăна килмест, кунта вара çанталăк условийĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ. Тен çавăнпах та пулĕ пыл хуртне Турă кайăкĕ теççĕ, утарти ĕç-хĕл епле йĕркеленинче унăн ирĕкĕ ытларах. Шел пулин те кăçалхи çу кунĕсем вĕлле хурчĕшĕн тата ăна пăхаканшăн ытла кăмăллах пулмарĕç. Çакăнта чи малтан ир-каç сивĕ пулни пысăк витĕм кӳчĕ (утарçăсем каланăран).

– 2010 çул питĕ пысăк тупăшлă пулчĕ. Пĕр çемьерен çитмĕл килограмм чухлĕ пыл илнĕ. Ун пек ăнăçлă çул тахçанах пулманччĕ, çавăн пекех кăçалхи евĕр тупăшсăрри тата ăнăçсăрри те, – пайларĕ хăй шухăш-кăмăлне пĕр утарçă.

Районта «Герой», Ильич ячĕпе, Мичурин ячĕпе, Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх предприятийĕсенче кăна утарсем вăйра тăраççĕ. Унччен тулли хăватпа ĕçленисем вара уйрăм çын аллине куçнă. Тăватă утарта икçĕр алă çемьене яхăн.

Хурт-хăмăр ĕçĕпе тачă тимлекен фермер хуçалăхĕсем те пур районта. Акă Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи В. Хлебников «Приокский» ăратлă амасем кăларассипе тимлет. Иртнĕ çул вăл «Çулталăкри чи ăста утарçă» ята тивĕçнĕччĕ.

Уйрăм хушма хуçалăхра та хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç анлăланса пырать, ку тĕлĕшпе 300 ытла çын тимлет.

**Р. МАКАРОВА.**

## Сĕнӳ

«Пахалăхлă пыла пахалăхсăрринчен мĕнле уйăрмалла-ши?, – ыйтать пыл туянма хатĕрленнĕ пĕр кинемей пасарта хăй пĕлĕшĕнчен.

– Кунта, паллах, пысăк вăрттăнлăх çук. Чи малтан вара тимлĕх кирлĕ. Чечек пылĕ çутă тĕслĕ пулать, çăкаран пухни – янтарь тĕслĕ, хура тулран пуçтарни вара тĕксĕм, хăмăр.

Пахалăхлă пыл туянас тесен апат кашăкĕпе пыл илмелле, ун çине çăкăр тĕпренчĕкĕ ямалла. Лайăх пыл ăшĕнче çăкăр тĕпренчĕкĕ хытать. Пахалăхсăрри çинче вара вăл исленет. Ăна тĕрĕслеме вара вăхăт нумай та кирлĕ мар.

Кĕр çитрĕ

## Сад-пахчари паянхи ĕçсем

Халĕ садра çырласене пуçтарса кĕртес ĕçсене вĕçлемелле. Вăхăтра пухмасан вĕсем тăкăнса усăсăр сая каяççĕ. Çырласене хальтерех татса пухни тĕмсене хĕл каçма лайăхрах хатĕрленсе çитме май парать.

Кунпа пĕрлех çырла тĕммисем йĕри-тавра тăпрана кăпкалатса унта органикăллă удобренисем хывса хăварасси пирки те манмалла мар.

Çулсем иртнĕ май çырла тĕммисем те вĕтĕ çимĕçлĕ пулса каяççĕ. Çапла вара унăн продукци параслăхĕ те самаях чакать. Çавăнпа та кун пек тĕмсене «çамрăклатас» тĕлĕшпе те тимлемелле. Тĕмсенчи хăрса кайнă е ватăлнă туратсене çĕр çумĕнченех касса илес пулать. Сăмахран, çимĕç пама пăрахнă хăмла çырлин турачĕсене тымар çумĕнченех иртсе тасатмалла.

Çу каçипе 150 сантиметр е ытларах çӳллĕш ӳснĕ çĕнĕ хунавсене тăпринчен 10–15 сантиметр касса кĕскетмелле. Кăшт вăхăт иртсен çав вырăнтан туратланса 30–40 сантиметр çĕнĕ вулăсем ӳсме пуçлаççĕ. Тепĕр çул вĕсене çуррине яхăн кĕскетмелле. Çапла вара пĕтĕм хунав вăй илсе çимĕç кӳрекен пулать.

Çак уйăхра çĕр çырли лартассипе те ĕçлемелле. Ку тĕлĕшпе тăпрана органикăллă тата минераллă удобренисем çителĕклĕ хывса хăвармалла. Лартса хатĕрленĕ калча çинче виçĕ çулçăран кая мар, лайăх аталаннă 6–7 сантиметр тăршшĕ тымар пулмалла. Çырла речĕсен хушши 70 сантиметр кирлĕ. Пысăк тĕм пулакан сортсене пĕр-пĕринчен 30 сантиметр хăварса, ыттисене 20–25 сантиметр хăварса лартмалла.

Çырла лаптăкĕсене 3–4 çулта пĕрре çĕнетсе тăмалла. Унсăрăн тĕмсем чирлеме тытăнаççĕ, çырли вĕтелет. Çавна май тухăç та чакать.

**А. ШАРИКОВ, пахчаçă.**

Канаш

## Гладиолус – мăнаçлă чечек

Гладиолус шултăра пултăр тесен ăна апатлантармалла, кăпкалатмалла. Çӳллĕ ӳсекен гладиолус чылай чухне тайăлса ӳсет. Çавăнпа та ăна йĕри-тавра тăпрапа купаламалла, сухание вара тарăнрах лартма тăрăшмалла. Тĕрлĕ тĕслĕ çурăлакан чечеке кашнине уйрăм çĕçĕпе касмалла, унсăрăн тĕсĕ пĕр пĕрине хутăшса каять.

Каснă чечек савăтра чылай хушă лартăр тесен шыва кăшт кăна сахăр песукĕ ямалла. Шыва тăтăш улăштарни те чечек ĕмĕрне вăрăмлатма пулăшать.

## Çĕр улми – сиплевçĕ



Çĕр улмие апат-çимĕç тĕлĕшпе кăна мар, сăнпите илем кĕртес енĕпе, сипленес тĕллевпе те питĕ анлă усă кураççĕ.

Эсир питĕ ывăннă, япăх çывăрнă е пĕр-пĕр уява васкамалла, кунĕпе ĕçре ĕшеннĕ – ан пăшăрханăр, сире чылай чухне çĕр улми пулăшĕ. Лайăх пĕçернĕ тата лăпчăтнă çĕр улмие лимон сĕткенĕпе хутăштармалла, пит çине хумалла, сăн-пит самай çуталĕ.

Чĕрĕ çĕр улмипе хăяра теркăламалла, пит çине хумалла. Тепĕр 20 минутран лимон сĕткенĕ хушнă лĕп шывпа çумалла, крем сĕрмелле.

Çĕр улмин çӳхе сийĕсене куç çине хумалла, çапла тусан куç йывăнни хăвăрт иртет.

Чылай чухне, уйрăмах пахчара ĕçленĕ хыççăн, алă çуркаланать. Çакăн пек чухне çĕр улми нимĕрĕпе усă курмалла, çавăн пекех ăна пĕçернĕ шыв та питĕ лайăх. Çаксемпе усă курнă хыççăн крем сĕрмелле.

Пуç ыратсан çĕр улмин çӳхе касăкĕсене çамка çине хумалла.

Ӳте пĕçертсен терка витĕр кăларнă е çӳхен каснă çĕр улми лайăх пулăшать.

## Пĕлтерӳсем. Объявления

## Тав тăватпăр

Пирĕн юратнă çыннăмăра, аннене, асаннене, хунямана – Мăн Сĕнтĕр салинче пурăннă Раиса Николаевна Пикусовăна юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, пирĕн пысăк хуйха пĕрле пайланăшăн тăвансене, ялйыша, кӳршĕ-пускилсене, Мăн Сĕнтĕр больницинче ĕçлекенсене чĕререн тухакан тав сăмахĕ калатпăр.

**Пикусовсен, Матвеевсен, Михайловсен çемйисем.**

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:072501:1, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Михайлова Ольга Васильевна, адрес: г. Чебоксары, ул. Фучика, д.53, квартира 9.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:072501:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Кадикасинское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.

***

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:150801:1, расположенный по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Андреева Римма Афанасьевна, адрес: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение, с. Чемеево, ул. Мира, д. 34.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:150801:1. Адрес местоположения: Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, Ярославское сельское поселение.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика-Чувашия, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика-Чувашия, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5 ООО «Аршин» и в филиале ФГБУ «ФКП Росреестра» по Чувашской Республике-Чувашии, по адресу: Чувашская Республика-Чувашия, г. Чебоксары. пр. Московский, д. 37.










**Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, керамзит. Адрес: с. Моргауши, «Агропромснаб».**
**Тел.: 8-905-340-07-78. 10-10.**

**Поправка:** В райгазете «Çĕнтерӳ ялавĕ» №16 (7870) от 5 марта 2011 года, стр. 4, в 3 колонке, перед 4 абзацем снизу следует читать: «Мы, участники долевой собственности Хораськина Фаина Прокопьевна, Хораськин Антон Олегович, объявляем о намерении выделить земельный участок в счет земельной доли 1,31 га (пашни) по 1/2 доли в праве каждый, расположенный на территории землепользования бывшего СХПК «Сеятель» Моргаушского района Чувашской Республики, Ярославского сельского поселения, участок расположен в северо-восточной части кадастрового квартала 21:17:130501», далее по тексту.

**Министерство юстиции Чувашской Республики сообщает, что судебные участки № 1 и № 2 Моргаушского района Чувашской Республики с 15 августа 2012 года расположены по новому адресу: ул. Мира, д. 9А, село Моргауши, Моргаушский район, Чувашская Республика.**

**Продаю доски дубовые необрезные, толщина 7-8 см, разной длины. Цена договорная.**
**Тел.: 8-908-307-07-44, 63-0-39. Николай. 2-2.**

**ТЦ «ЛОТОС» реализует профнастил от 220 р.за п/м, трубы для ограды диаметром 60 – 120 руб. п/м, трубы ворот диаметром 133 – 460 руб., диаметром 114 – 360 руб. за п/м, профильные трубы 40х20 – 56 руб. Тел.: 8-917-665-27-26, 8-917-661-02-32. 1-10.**

**Предприятию требуются: сверловщики, фрезеровщики, токари, слесари, водитель 1-го класса – с зарплатой от 12 тыс. руб.; разнорабочие и упаковщицы – с зарплатой 8 тыс. руб. Работа в г. Чебоксары.**
**Телефон: (8352)50-79-10.**

***

**Подготовка частных охранников 4 (2800 руб.), 5 (3800 руб.) разрядов. Прием квалификационных экзаменов комиссией МВД по ЧР. По окончании выдается свидетельство. Тел.: (8352) 22-04-15, Чебоксары, Вурнарское шоссе, 10. 1-10.**

***

**Йывăç пӳрт хуралтăсемпе пĕрле тата КРН-21 косилка сутатăп. Тел.: 89656813721.**

***

**Сумалли качакасем тата виçĕ уйăхри путексем (1 така, 3 путек) сутатăп, ăратлă çемьерен. Хаклă мар.**
**Тел.: 89603009680, 63-4-35.**

**Постановление администрации Ильинского сельского поселения № 45 от 02 августа 2012 года**
**О проведении публичных слушаний по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

В соответствии со ст. 28 Закона Российской Федерации от 06.10.2003 года № 131-ФЗ «Об общих принципах местного самоуправления в Российской Федерации», ст. 14 Устава Ильинского сельского поселения Моргаушского района ЧР **постановляю:**

1. Провести публичные слушания по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» 25 августа 2012 г. в 10 часов 00 минут в здании администрации Ильинскоо сельского поселения по адресу: ЧР, Моргаушский район, д. Тренькино, ул. Новая, д.5.
2. Настоящее постановление подлежит официальному опубликованию в районной газете «Знамя победы».
3. Постановление администрации Ильинского сельского поселения № 29 от 23 мая 2012 года признать утратившим силу.

Глава Ильинского сельского поселения Ю.В. Перцев.

**Проект муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка»**

Руководствуясь п.10 ст. 3 Федерального закона от 25 октября 2001 года № 137-ФЗ «О введении в действие Земельного Кодекса Российской Федерации», с учетом результатов публичных слушаний постановляю:

Изменить разрешенное использование земельного участка из категории «земли населенных пунктов»:

- с кадастровым номером 21:17:030101:47 площадью 1000 кв. м., местоположение: Чувашская Республика Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, выселок Васильевка, ул. Главная, д. 19 с «для выращивания овощей и картофеля» на «для ведения личного подсобного хозяйства».

С предложениями по проекту муниципального правового акта «Об изменении разрешенного использования земельного участка» обращаться в администрацию Ильинского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики с 8-00 до 17-00 часов, кроме выходных дней. Последний день приема предложений 25 августа 2012 года до 9-00 часов.

**ЮВЕЛИРНАЯ МАСТЕРСКАЯ:**
**– ремонт и изготовление ювелирных изделий из золота и серебра;**
**– скупка золота (цена за 1 г 850 руб.), старинных монет.**
**Адрес: в здании Дома быта.**
**Тел.: 8-927-668-85-01. 9-10.**

**МЫ ПОМОЖЕМ ЗАРАБОТАТЬ!!!**
В Москву и Московскую обл. требуются
**ФАСОВЩИЦЫ, ГРУЗЧИКИ**
Питание, проживание — БЕСПЛАТНО.
Вахта. Выезд группами до предприятия.
Гарантии. З/п 25 000 – 35 000 руб.
**Тел.:8(8352)29-80-30, 29-50-30.** 3-5.

**24 августа с 9.00 ч. до 15.00 ч. в районном Доме культуры с. Моргауши Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви (лето-осень) из нат. кожи производителей Ульяновска и Белоруссии.**

**СПУТНИКОВЫЕ АНТЕННЫ**
**2500 руб.**
**РАССРОЧКА.**
**ТРИКОЛОР. ТЕЛЕКАРТА.**
**Тел.: 905-345-77-19.** 2-10.

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА**
**от производителя.**
**Замер. Доставка бесплатно.**
**Низкие цены.** 5-10.
**Тел.: 8-987-576-65-62.**




**ВЫ ЗВОНИТЕ – МЫ ПРИВЕЗЕМ: цемент, блоки керамзитобетонные, профнастил, профили, трубы, уголки, утеплитель, гипсокартон, поликарбонат, теплицы и многое другое. Адрес: д. Рыкакасы, т.ц. «Лотос».**
**Тел.: 8-917-661-02-32.** 8-10.

**ОКНА VEKA на века.**
**Металлические двери из Йошкар-Олы.**
**Гарантия 3 года.**
**Под ключ.**
**Тел.: 8-919-666-39-02,**
5-5. **8(83547)23-2-96.**

# ПИЛОМАТЕРИАЛЫ: ЛЮБОЙ РАЗМЕР
# ТЕЛ.: 8-903-346-40-58.
6-10.

**ВНИМАНИЮ ЖИТЕЛЕЙ СЕЛА МОРГАУШИ И МОРГАУШСКОГО РАЙОНА**

**В период с 25 апреля по 31 сентября 2012 г. СУПЕРАКЦИЯ «Мы вернем вам 2500 руб. за каждое окно»**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА, ВИТРАЖИ, БАЛКОННЫЕ РАМЫ, ПЕРЕГОРОДКИ**
**по минимальным ценам! Москитная сетка в подарок**

**Срок изготовления от 3 до 5 дней. Германское качество. Пенсионерам дополнительные скидки**

| ОКНА | КОНДИЦИОНЕРЫ |
| --- | --- |
| сельский вариант от 3500 р.<br>квартира от 5300 р. | от 13999 р.<br>Продажа. Монтаж. Гарантия. |

**«ДАНИЛА-МАСТЕР» ул. 50 лет Октября, д. 6 (торговый центр «Универмаг», 2 этаж).**
**Тел.: 8-927-667-34-38, (83541)37-34-38** 3-5.

**Продаем керамзитобетонные блоки, цемент, песок, гравмассу, щебень, кирпич.**
**Тел.: 8-960-307-41-78. 5-10.**

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно.**
**Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 19-20.**

**ГРАВМАССА, ЩЕБЕНЬ (доломитовый, гранитный, известковый), КЕРАМЗИТ, ПЕСОК (речной, карьерный), БЕТОН с доставкой до 30 т. за 1 рейс.**
**Тел.: 8-927-668-70-15, 38-70-15. 16-18.**

***

**Требуются в Псковскую область строители-разнорабочие, мужчины от 18 лет. З/п от 1200 руб. в день. Бесплатно: проживание, питание, доставка до места работы и обратно. Гарантии. Т.: 89370110656.**

***

**Утерянный аттестат № 829092, выданный в 1995 году Нискасинской средней школой на имя Горшкова Петра Вячеславовича, считать недействительным.**

***

**Утерянный аттестат о среднем образовании серии 21 АА № 0017795, выданный МОУ "Москакасинская СОШ" в 2008 году на имя Бабушкина Юрия Григорьевича, считать недействительным.**

***

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, неконтиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы.**
**Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352)44-20-97. 7-12.**

***

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Каждое седьмое окно в подарок и замок на ручках окон. Шестикамерный профиль по цене трехкамерного. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16а.**
**Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-662-71-64. 9-12.**

**Ĕне, вăкăр, пĕчĕк пăру, сурăх туянатăп.**
**Тел.: 8-905-343-60-63. 5-10.**

***

**Тюкланă утă (люцерна) сутатăп, иккĕмĕш çулни.**
**Тел.: 89196582590, 89053431622.**

***

**Закупаю бычков, телок, баранов.**
**Тел.: 89053434623. 1-10.**

***

**Продаю песок, гравмассу, бой кирпича с доставкой.**
**Тел.: 89053479915, 67-66-95. 1-10.**

**В Нижний Новгород требуются рабочие на сборочное производство автофургонов и спецавтотехники. Вахтовый метод (две недели через две). Питание, проживание бесплатно. Выезд группами до предприятия. Соц. гарантии. З/п 25000-40000 руб. в месяц. Тел.: 8-908-766-41-45 (Н.Новгород), 8-906-386-56-82 (Чувашия). 5-5.**

***

**Вăкăр, пăру, сурăх туянатпăр.**
**Тел.: 8-987-665-02-13.**

***

**Январь уйăхĕнче 3-мĕш пăруламалли хура-шурă тĕслĕ ĕне сутатăп. Тел.: 8-927-993-43-45.**

Финансовый отдел администрации Моргаушского района Чувашской Республики выражает глубокое соболезнование специалисту-эксперту финансового отдела Ердуковой А.В. по поводу безвременной кончины отца

**ЕРДУКОВА**
**Валерия Васильевича.**

Администрация и коллектив МБОУ «Калайкасинская СОШ им. А.Г. Николаева» выражает искреннее соболезнование семье и близким в связи с преждевременной кончиной

**КАРГИНОЙ**
**Анфисы Александровны.**

## Прогноз погоды

| | суббота 18 августа | | | | воскресенье 19 августа | | | | понедельник 20 августа | | | | вторник 21 августа | | | |
| --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- | --- |
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | | | | | |
| Температура °C | +16 | +19 | +20 | +16 | +15 | +18 | +20 | +15 | +13 | +19 | +21 | +16 | +15 | +17 | +17 | +16 |
| Давление мм | 743 | 741 | 740 | 741 | 742 | 742 | 743 | 743 | 743 | 741 | 739 | 738 | 737 | 736 | 735 | 735 |
| Влажность % | 88 | 82 | 76 | 88 | 90 | 79 | 57 | 91 | 87 | 75 | 56 | 83 | 92 | 97 | 89 | 98 |
| Ветер м/сек | 3 | 4 | 5 | 3 | 3 | 3 | 3 | 1 | 1 | 2 | 3 | 3 | 2 | 3 | 3 | 1 |
| | В | С-В | С-В | С | С | С | С | В | Ю | Ю | Ю | Ю | Ю-В | Ю-В | В | В |
| Солнце восход / заход | 05:31 20:21 | | | | 05:33 20:19 | | | | 05:35 20:16 | | | | 05:37 20:14 | | | |
| Луна восход / заход | 06:34 19:57 | | | | 07:55 20:15 | | | | 09:18 20:34 | | | | 10:41 20:55 | | | |
| фаза | | | | | | | | | | | | | | | | |

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла таврăса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 17.08.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4493.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.